ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

13-14 (4427-4428) №№, 2015, апрель / ака / , 2
(1931 çулхи январĕн / кăрлачăн / 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

## Пысăк аттепе аннен хаклă парни

*Пуш уйăхĕн вĕçĕнче Эля Пашкова пилĕк çул тултарчĕ. Савăнăçлă уява хĕреснеамăшĕпе хĕреснеашшĕ те килчĕç. Парнесемпе савăнтарчĕç.*



– Тата та хĕпĕртемелли – вĕсем мана иртнĕ çултанпах «Тетте» çырăнса параççĕ. Ӳкерме юрататтăр пиччепе, çавăнпа хамăрăн ĕçсене пĕррехинче журнала та ярса патăмăр. Вĕсем пичетленсен çав тери хĕпĕртерĕмĕр... Саспаллисене паллакалатăп. Вулама çăмăлах мар пулин те – тăрăшатăп. Йывăртараххисене иккĕмĕш класра вĕренекен Артем пиччерен ыйтатăп. Вăл самантрах йывăрлăхран тухма пулăшать. Ăна та пысăк амăшĕ «Теттепе» савăнтарать. Çапла вара пире харăсах почтальонка икĕ журнал парса хăварать. Çакă иккĕри Рома шăллăма питех те килĕшмест. Сăлтавĕ – ăна валли "Тетте" çуккинче. Иртнинче вăл манăн алăри журнала сисмен чухне кап! туртса илчĕ те кравать айне тарса пытанчĕ. Эпĕ те унран юлмарăм. Юнашар вăшт çеç кĕрсе лартăм. Тем пек тилмĕрсен те «Теттене» тавăраймарăм. Чун кӳтсе çитнипе макăртăм, анне патне чупса тухрăм. Кун пек пăтăрмах пĕрре çеç мар пулчĕ ĕнтĕ. Эпир пиччепе журналпа паллашнă вăхăтра самантрах ручкăпа ăçта май килнĕ çавăнта çырса хурать. Çурса илме те ӳркенмест! Тата тепрехинче, каçхине, «Теттене» минтер айне хутăм та тарăн ыйха путрăм. Ирхине юратнă кăларăмпа киленес тесе алла минтер айне чиксе ятăм... çук, тупаймарăм журнала. Вăштах сиксе тăтăм вырăн çинчен, кресло çинче Рома журнал тытса ларать иккен. Макăрма тытăнтăм... Шăп çав вăхăтра пӳрте анне кĕчĕ. «Мĕн-ма пур-çукшăн хирĕçмелле? Эсир виççĕр пĕртăван, сирĕн туслă пурăнмалла. Июльтен пуçласа Ромăна та «Теттеллĕ» тăвăпăр, вара пирĕн киле харăсах виçĕ журнал килме тытăнĕ», – терĕ ăшшăн калаçса. Ах, çав уйăхĕ тата хăçан çитетши? Ăна кĕтсе ывăнмаллах пуль ĕнтĕ. Пысăк аттепе анне парнине хамăнах типтерлĕ упраса-пухса пырасчĕ. Унти хитре ӳкерчĕксене пăхма, тĕрлĕ сăрлавсене илемлетме питĕ килĕшет-çке мана, – терĕ Эля хăй шухăшне палăртса.

Хĕрача садике çӳреме кăмăллать. Шăматкунсерен пиччĕшĕ пĕлӳ çуртне кайсан тунсăха путать вăл.

– Çак кун шкул ĕçлет пулсан, мĕншĕн садик пире йышăнмасть? – тесе чунтан пăшăрханать.

Канмалли кунсенче Артемпа урамра темччен выляма юратать Эля. Уншăн вырсарникун – чи кĕтнĕ кун.

***Элиза ВАЛАНС.***

Йĕпреç районĕ,
Пучинке.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

## Çитĕнӳ сире, Ирина Николаевна!



Ача-пăчана чун-чĕререн юратакан, вĕсене пĕтĕм вăй-хала пама хатĕр воспитательсем тăрăшаççĕ пирĕн район шкулĕсенчи кĕçĕн çулхи ачасен ушкăнĕсенче. Вĕсенчен пĕри – Ирина Николаевна Воронова. Кăçал та Елчĕкри тĕп библиотекăра «Çулталăкри воспитатель-2015» конкурс иртрĕ. Вун пилĕк воспитатель хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ, çĕннине шыранине тĕслĕхсемпе кăтартрĕ. Ирина Николаевна аслă ушкăнри ачасемпе ĕçлес тĕлĕшпе те лайăх кăтартусем тума май пуррине çирĕплетрĕ. Елчĕкри «Шевле» ача садĕнчи аслă ушкăн пепкисемпе тĕрлĕ ĕç кăтартса конкурсăн иккĕмĕш тапхăрне тухма пултарчĕ.

Ирина Николаевна йĕркеленĕ «Хаваслă пĕчĕк тумлам путишĕсем» вылявлă-сăнавлă вăйăпа шыв çинчен нумай çĕннине тĕшмĕртрĕç. Пурнăçри шыв пĕлтерĕшĕ пирки те, унпа перекетлĕ усă курмаллине те, шывра тимлĕхе çухатас çуккине те пĕлме пултарчĕç пĕчĕк тусăмăрсем. Маттур воспитателĕн ĕçне-хĕлне, тĕпчевне, шыравне жюри те пысăк хак пачĕ. Конкурсăн «Мастер класс» тата «Çавра сĕтел» тапхăрĕнче те ăна çитĕнӳ те ăнăçу сунас килет.

***Людмила ЛЬВОВА, воспитатель.***

**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** Ирина Николаевна Воронова ачасемпе яланах ăшă кăмăлпа ĕçлет.

Елчĕк районĕ,
Шăмалак шкулĕ.

# Калем ăстисем – тĕлпулура

**Хĕрлĕ Чутай районĕнчен тухнă паллă çын сахал мар. Раççей писателĕсен союзĕн членĕ ятне илнисем – Иван Лисаев, Александр Угольников, Розин Ярандай, Петĕр Ялкир, Николай Сергеев. Вĕсен хайлавĕсене юратса вулатпăр, ăса хыватпăр. Лайăх произведени вилĕмсĕр, вăл хăйне çыраканăн ятне халăхра ĕмĕр-ĕмĕр упрать.**



21-мĕш ĕмĕрти çыравçăсем вара нумаях пулмасть Хĕрлĕ Чутайри Тĕп вулавăшра шкул ачисемпе йĕркеленĕ тĕлпулăва пуçтарăнчĕç. Уява вулавăш ĕçченĕ Елена Чубайкина йĕркелесе ертсе пычĕ.

Литература çулталăкне халалланă мероприятие уçма сцена çине Хĕрлĕ Чутай районĕн вĕрентÿ пайĕн ертÿçин ĕçĕсене туса пыракан Татьяна Николаевна Шереметьевăпа культура пайĕн пуçлăхĕ Александр Николаевич Самсонов тухрĕç.

Татьяна Николаевна пухăннисене Литература тата Константин Иванов çулталăкĕ ячĕпе саламларĕ. Ачасене вара аслисене питĕ тимлĕн итлесе ларма, вĕсенчен çырма, кĕнекене юратма вĕренме сунчĕ.

– Çырасси кашниййĕнех пулаймасть ĕнтĕ, вăл – Турă панă япала. Çыравçăсене Турă çамкинчен чуптуса илнĕ теççĕ, çавăн пеккисем татах та çуралччăр, – ытарлăн пуçларĕ хăйĕн сăмахне Александр Николаевич. – Эпир, Чутайсем, хамăра харсăрлăхпа кăтартсан та, çырас енĕпе те харсăр пулмалла. Паллах, пирĕн чапа тухнă писатель-поэтсем ытти районсемпе танлаштарсан сахалрах. Анчах шучĕ мар, пахалăхĕ пĕлтерĕшлĕрех. Розин Ярандай кĕнекисене хапăлласах вулатпăр, Петĕр Ялкир сăввисене юрататпăр... Çавăн пек писательсем, поэтсем татах çуралсан, эсир çакăн пек килсе ларсан пирĕн тĕлпулу яланах питĕ анлă та савăнăçлă иртĕ.

Чăваш писателĕсен пĕрлешĕвĕнче тăракан Александр Петрович Трофимов литературăна юратакан çынсем районта нумай пулнине палăртрĕ. Ял çыннисем тĕлпулсан хаçат-журналта пичетленнĕ сăвăсем пирки калаçнине сахал мар илтнĕ вăл, çакăншăн питĕ хĕпĕртет. Эппин, ял çыннисен чунĕ çÿллĕ шайра тăрать, пурăнас кăмăлĕ вăйланать.

Галина Зотова шкулта акăлчан чĕлхи вĕрентет пулсан та ачасене чăвашла çырма хавхалантарса пырать. Вĕренекенсен ĕçĕсене пухса кĕнеке хыççăн кĕнеке пичетлет. Ахальтен мар Штанаш шкул ачисем Чăваш халăх сайчĕн ертÿçи Николай Плотников йĕркелекен фантастика калавĕсен конкурсне хутшăнса виçĕ кĕнекере пичетленнĕ!

– Çыннăн хăйĕн хыççăн ырă ят хăвармалла. Эпĕ ытларах ачасене çыртарма тăрăшатăп. Шкулта ĕçлеме пуçланăранпа яланах «Тантăш» («Пионер сасси») хаçатпа çыхăну тытса вĕренекенсене унти конкурс-викторинăсене хутшăнтаратăп, – каласа парать Галина Вячеславовна. – Ачасем, эсир хăвăр Чутай çынни пулнине нихăçан та ан манăр. Паян пулмасан, ыран тепре çырса пăхăр. Сăвă-калавăр хальхинче тухаймасан та тепрехинче пурпĕрех пичетленет. Вара сире те, Чутай çинчен те пурте пĕлĕç.

Туктамăш ялĕнче çуралса ÿснĕ Николай Германович Кортунов вара ял тата район историйĕпе интересленсе кĕнекесем çырать. Тĕлпулăва пуçтарăннисене вăл «Чутай» сăмах «чут» (çутă) тата «ай» (айлăм вырăн) сăмахсенчен пулса кайнине ăнлантарчĕ. Ачасене ял, шыв-шур историйĕпе кăсăкланма вĕрентсе каларĕ, Чутай чĕлхине манма юраманнине асăрхаттарчĕ. Чăнах та, асатте-асаннесенчен килекен чĕлхене мансан вырăнти ятсем мĕнле пулса кайнине те тĕпчесе пĕлеймĕн-çке.

Владимир Михайлович Чеблуков шкулта чухнех сăвă çырма пуçланă, кайран салтакра та çак килĕнĕçе пăрахман. Çар тивĕçне пурнăçланă вăхăтра та «Ялав» журнал çырăнса илнĕ вăл.

– Шупашкартан ман пата чаçе килекен тăван журнал чуна вăй паратчĕ, – аса илет пурнăçне литературăпа çыхăнтарнăскер.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче сăввине те, кĕввине те хăйсемех çыракансем пур: Земфира Кузьминична Яковлева, Зоя Сергеевна Спиридонова, Анатолий Александрович Печников, Алексей Никитин, Александр Быков, Ольгăпа Николай Пономаревсем... Зинаида Чернова хăйĕн сăввипе хăех кĕвĕленĕ юрăпа уява тата савăнăçлăрах турĕ.





Ачасем хушшинче те сăвă çыракансем пурах. Хĕрлĕ Чутай шкулĕнче саккăрмĕш класра вĕренекен Павел Манин тата Аня Инжебейкина сцена çине тухса хăйсен хайлавĕсемпе паллаштарчĕç. Эппин, Хĕрлĕ Чутай çыравçисен малашлăхĕ пур-ха.

Литература çулталăкĕ çĕнĕрен те çĕнĕ талантсене тупса вĕсене аталанма пулăшасса шанас килет.

***Лариса ПЕТРОВА.***

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

*Саламсене пĕлтермелли номерсем:*
8987674183
89051975911

Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Кăканар ялĕнче пурăнакан, кулленех мана савăнтаракан почтальонка **Лидия Алексеевна ЛОГИНОВА** ыран хăйĕн сумлă юбилейне паллă тăвать. Ăна çирĕп вăй-хал, иксĕлми телей, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшÿпе тату сунатăп.

***Нумай хаçат çырăнакан.***

Элĕк районĕ,
Мăн Карачура ялĕ.

✦ ✦ ✦

Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Карачура ялĕнче пурăнакан, ĕмĕрех трактористра ĕçленĕ, мăшăрĕпе икĕ хĕр ÿстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă **Виталий Андреевич АНДРЕЕВ** çитес кунсенче хăйĕн 70 çулхи юбилейне паллă тăвать. Эпир ăна чĕререн саламлатпăр, çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, пурнăçра ăнăçупа телей, çемьере килĕшÿпе тату сунатпăр.

***Ял-йыш, тăванĕсем.***

Элĕк районĕ.

✦ ✦ ✦

Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă **Олеся Карсакова**! Эпир сана юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, уйăх пек çутă телей, кĕр мăнтăрĕ пек тулли пурнăç сунатпăр. Хăвăн пекех ăшă чунлă ырă кăмăллă çынсем кăна тĕл пулчăр пурнăç çулĕ çинче. Кăçал экзаменсене ăнăçлă тытса аслă шкула вĕренме кĕмелле пултăр. Ытарайми Олеся, эпир сана хытă юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр!

***Саламлаканĕ санăн аппу – Мария САМДЕЛОВА.***

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
**54802** - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
**11466** - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1804 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1203
Пичете апрель уйăхĕн 1-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш
13-14 №№, 2015, апрель, 2 

# Сармантейĕн сар чĕпписем














«Сирĕн пĕр пушă вăхăт та çук пуль? – тек интересленеççĕ шкулти ытти класс ачисем виççĕмĕшсемпе тĕл пулсан. – Эсир таçта та çитме, темĕн тума та ĕлкĕрнĕрен калатпăр çакна», – сăмах хушаççĕ тепĕртакранах.

«Ывăнтăмăр», «Ку ĕçе пирĕн тăвас килмест», «Кичем» сăмахсем вĕсемшĕн ют. Лара-тăра пĕлменскерсем физкультура хусканăвĕсем тăваççĕ те ывăннине самантрах ирттерсе яраççĕ. Хĕл кунĕсенче йĕлтĕр е коньки çине тăрса пĕр-пĕринпе ăмăртмалла чупаççĕ, çĕр шыв-шуртан типсен е ешĕл курăк тухсан вара футболла выляççĕ. Кичем пурнăç тути-масине пачах чухламанскерсен тунсăхласа ларма чăннипех те вăхăт тупăнмасть.

Класс пурнăçĕ вĕресе тăрать тейĕн. Темĕнпе те интересленнĕренех кашни шашка-шахматла выляма хăнăхрĕ. Вăйăсенче фигурăсене ним шухăшламасăр куçарни кăна кирлĕ мар-çке – çĕнтерес тесен малаш комбинацисене пĕлсе тумалла. Çакна та аван ăнланаççĕ вĕсем.

Ачасем китай оригамипе виçкĕтеслĕ модульсенчен тĕрлĕ фигурăсем ăсталама маçтăр. Ку «чир» ачасен çемйисене те ернĕ. Кашниех халь модуль тума тăрăшать. Районта иртнĕ «Мăнкун савăнăçĕсем» фестивальтен Кирилл Порфирьев дипломпа таврăнчĕ. Мĕн тери савăнчĕ арçын ача. Класс савăнăçĕ вара виçесĕр тейĕн. Вăлах МЧС ирттернĕ «Йĕркелĕх хуралĕнче» конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăнса таврăнчĕ. Катя Яковлева та ăста хĕрача. Республикăри çамрăк юрăçăсен ăмăртăвĕнчен вăл малти вырăнсенчен пĕрне йышăнчĕ, хăйĕн çепĕç сассипе куракансене тыткăнларĕ. Виктория Ильинана ташă çаврăмĕнче çитекен урăх никам та çук. Вăл «Степ» ташă студире хăйĕн ăсталăхне туптанăранах районта тата республикăра иртекен конкурссене хутшăнма тивĕçет. Акробатика фигурисене унран лайăх тăвакан пур-ши тата? Паллах, ку тĕлĕшпе вăл пирĕн шкулăн «çăлтăрĕ». Шпагат ларасси, «кустăрма» пулса сцена çинче çаврăнасси уншăн пĕрре те кăткăс мар.

Виççĕмĕш класрах пĕр минутра текстри 170 сăмаха тĕрĕс те янăравлă вулас тĕлĕшпе Лена Ивановăна кам çитме пултарĕ-ши тата? Класри ачасем тăрăшуллă та маттур. Кашнинчен вутхĕм сапса тăрать. Шкул хаçатне кăлармалла-и – кунта каллех виççĕмĕшсем малта, класа илемлетмелле-и – хальхинче те вĕсен класĕ чи таси те илемли. Литература тата Константин Васильевич Иванов çулталăкне эпир тивĕçлĕ шайра йĕркелесе ирттересшĕн.

Пуриншĕн те савăнатпăр. Вĕренекенсем «Тантăш» хаçатпа «Тетте» журнала юратса вулаççĕ. Вĕсене ачасем çулленех хаваспах çырăнаççĕ. Ку çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче те пурте çырăнса илме шантараççĕ. «Вĕсем пирĕн юратнă хаçат-журналсем!» – теççĕ савăнса та йăл кулса.

Манăн вĕсене йăвари чăх чĕпписемпе танлаштарас килет. Мĕн тери маттурккасем-çке пĕчĕкскерсем! Чиперккесене çак сăвва халаллас кăмăлăм та пур.

Сармантейĕн сар чăххи
Çăмартасем тунă тет.
Çирĕм пĕр кунран хайхи
Чĕпписем те тухнă тет.
Пĕринчен тепри маттур.
Ултă автан, тăват чĕп –
Пĕринчен тепри правур,
Вунпĕрĕшĕ те питĕ шеп.
Ав, шкула, Арапуçне
Авăн пĕрремĕш кунне
Килчĕç вунă шăпăрлан –
Пĕринчен тепри аван.
Лена – ăслă хĕрача,
Вĕренме вăл тăрăшать.
Класра Президент пулса
Тĕрлĕ ĕçе пурнăçлать.
Катя – хитре хĕрача,
Пĕр ĕçрен те хăрамасть.
Пур ĕçе те вăл вăр-вар
Пурнăçлама пултарать.
Класра икĕ Кирилл пур,
Пĕринчен тепри правур.
Иккĕшĕ те пит типтерлĕ,
Ĕненмесен пыр та кур.
Вика вара вăл ялан
Шкула килет чи малтан.
Ташлама вăл юратать,
Спортпа туслă пурăнать.
Антон чи çӳлли класра,
Çук мухтанчăклăх унра,
Савăнать кукашшĕпе,
Унăн ылтăн аллипе.
Аппăш сăмахне итлет,
Ун сăмахĕнчен иртмест.
Ĕçленĕ чух васкамасть –
Спартак нумай калаçмасть.
Эдик ялан тап-таса,
Вăл типтерлĕ шкул ачи.
Йăмăкне вăл юратать,
Ашшĕн сăмахне итлет.
Лира ятлă хĕрача
Сăмах çапма юратмасть.
Кашни ĕçе çак ача
Васкамасăр пурнăçлать.
Костя та пур пирĕн класра,
Юратать вăл шутлама.
Пур çĕре те ĕлкĕрет –
Выляма, чупма, кулма...
Сармантейĕн чĕпписем –
Тĕрĕс-тĕкел ачасем.

***Маргарита КРЫЛОВА,***
***3-мĕш класс вĕрентекенĕ.***
Вăрмар районĕ,
Арапуç шкулĕ.



# Карайсем – маттурсем

## Спорт вĕренӳре пулăшать



«Ачасем яланах мĕнле те пулин ĕçпе кăмăлтан аппаланаççĕ. Ку питĕ усăллă, çавăнпа та вĕсене нихăçан та чăрмантармалла мар. Пачах тепĕр майлă – ăна яланах мĕн те пулин ĕçлеме хавхалантармалла», – тесе çырать Чехи писателĕ Ян Амос Коменский. Чăнах та, ачасене яланах тĕрлĕ япала кăсăклантарать. Кашни пур енлĕн аталанас тесе тăрăшать. Шкулта вĕренекенсем те спорт секцийĕсенче хулçурăма çирĕплетеççĕ, кружоксенче вăхăта усăллă ирттереççĕ кăна мар ăсталăхпа тавракурăма та аталантараççĕ.

– Шкулта тата районта иртекен пур ăмăртăва та хутшăнса хамăн вăя тĕрĕслесе пăхатăп, – каласа парать улттăмĕш класри Кирилл Кузьмин. Мĕн пĕчĕкрен спорта юратаканскерĕн пушă вăхăчĕ те сахалтарах иккен. Вăл яланах мĕнпе те пулин кăсăкланать, çĕннине пĕлме ăнтăлать. Кунта унăн çывăх çыннисен тӳпи те пысăк. Юратнă амăшĕпе куккăшĕсем Кирила спортпа туслашма, сывă пурнăç йĕркине хăнăхма пулăшнă. Çакăншăн арçын ача вĕсене тав тăвать.

– Анне мана ирхине тăрсанах хусканусем тума хăнăхтарчĕ, – паллаштарчĕ хайĕнпе Кирилл. – Кайран хул-çурăма нӳрĕ алшăллипе сăтăратăп. Ун пек ыйхă та часах вĕçсе каять. Шкула хаваслă кăмăл-туйăмпа утатăп.

Шкулта та кашни ир, уроксем пуçланас умĕн зарядка тăвасси йăлана кĕнĕ. Хаваслă кĕвĕпе 10 минут хусканусен ытамне лекеççĕ ачасем.

– Зарядкăна класри физоргсем ирттереççĕ, – тет Кирилл шкул пурнăçĕпе паллаштарса. – Ку ырă йăла пурин кăмăлне те каять. Ун хыççăн эпир парта хушшине çĕкленӳллĕ кăмăлпа ларатпăр. Çавăнпа та пулĕ пирĕн шкулта «4» тата «5» паллăсемпе вĕренекенсен йышĕ пысăк, – хаваслăн йăл кулать арçын ача.

Çаврăнăçуллăскер те вăр-варскер уроксем хыççăн та спортзала çул тытать. Кирилл спорт секцийĕсенче иртекен занятисене нихăçан та сиктермест-çке.

– Ытларах йĕлтĕрпе ярăнма тата шашка-шахматла выляма кăмăллатăп, – терĕ вăл. – Çавна май ку енĕпе ăмăртусене те тăтăшах хутшăнатăп. Наградăсене вара ятарлă портфолиона типтерлĕн пухса пыратăп.

Нумай пулмасть Çĕнĕ Шупашкарти шахмат турнирне хутшăнма пултарнăшăн питĕ хĕпĕртет вăл. Шкул чысне хӳтĕлесси – яваплă ĕç вĕт-ха. Карай шкулĕн команди ун чухне те малти вырăна тухса наградăпа таврăннă.

– Çав турнирта малтисен йышне кĕни калама çук хавхалантарчĕ. Çунат хушăнчĕ тесен те йăнăш пулмасть пуль, – кăмăллăн кулать Кирилл. – Яланах çитĕнӳ пирĕнпе пултăрччĕ!

Ачасем тĕрлĕ ăмăртăва хаваспах хутшăнни вĕрентекенсене те савăнтарать. Спортпа кăсăкланакансене вара Вера Юрьевна Иванова физкультура вĕрентекенĕ хавхалантарса пырать. Вăлах ăмăртусене те хатĕрлет.

– Вера Юрьевна яланах тĕрĕс сĕнӳ-канашпа пулăшать, – калаçрĕ Кирилл вĕрентекенĕпе мăнаçланса. – Пирĕн çитĕнӳсенче унăн тӳпи питех те пысăк. Илемлĕ те çутă спортзалта выляма, ăмăртма май туса панишĕн шкул ертӳçисене епле-ха палăртса хăвармăн.

Мал ĕмĕтлĕ арçын ача чылай ăмăртăва хутшăнса мала тухасшăн çунать. Вăл вĕрентекенсемпе çывăх çыннисене хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе савăнтарас тĕллевлĕ пулни ăна яланах ăнăçлăха ĕненме хистет.

## «Эпĕ вăйлă вĕт!»



– Вăл питĕ хăйне евĕрлĕ хĕрача. Унăн тавракурăмĕ те ыттисенчен уйрăлса тăрать, – тет Карина Ильина пирки унăн вĕрентекенĕ Любовь Юрьевна Платонова. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна тантăшĕсем те хисеплеççĕ.

Карина, саспаллисене пĕлме пуçласанах кĕнекепе çывăх туслашнă. Хайлавсене пĕрин хыççăн теприне «шĕкĕлченĕ». Пурăна киле хăйне ытларах фантастика калавĕсем илĕртнине туйса илнĕ. Çапла хĕрачан хăйĕн асамлă «тĕнчи» çуралнă. Унта пурте ырă, йăлтах илемлĕ те çутă. Карина тарăн шухăшлă та интереслĕ хĕрача. Хăш чухне ăна тантăшĕсем ăнланман самантсем те пулкалаççĕ. Анчах вăл кӳренмест: хăçан та пулсан хăйне ăнланакан тата кăмăл-туйăмпа пĕр пек тус тупассине шанать. «Пĕлĕтре вĕçсе çӳреме» кăмăллаканскер чылай вăхăт шухăшсен, ĕмĕтсен авăрĕнче ирттерет. Çавна май унăн пуçĕнче тĕрлĕ сăнар çуралать. Кун пек чухне Карина ăна ятарлă альбома куçарма васкать. Чи ăнăçлă ӳкерчĕксем вара – портретсем. Вĕсем хĕрачан чылай пухăннă ĕнтĕ. Шкулта иртекен ӳкерчĕксен, сăвă пăхмасăр илемлĕ вулакансен тата ытти пултарулăх конкурсĕсене вăл яланах хаваспах хутшăнать.

Ăста та вăл. Ахаль çиппе вĕтĕ шăрçа илет те тĕрлĕ эреш тĕрлет. Тĕрĕ вăрттăнлăхне вара ăна кукамăшĕ уçса панă, вĕтĕ шăрçапа ĕçлеме Каринăна юратнă вĕрентекенĕ Любовь Юрьевна хăнăхтарнă. Шкулта «Тăварлă чуста» кружок ĕçлет. Питех те интереслĕ занятисем иртеççĕ унта. Карина чăтса тăрайман, васкасах çав кружока çӳреме тытăннă.

– Кружок ячĕ эпир унта мĕн ĕçленине хăех уçăмлатать, – ăнлантарчĕ Карина. – Эпир тăварлă чустаран тĕрлĕ кӳлепе ăсталатпăр. Малтан типĕтетпĕр, унтан гуашьпа сăрласа илемлететпĕр. Юлашкинчен сăрăна лакпа сĕрсе çирĕплететпĕр.

Алĕç класĕнче ачасем ăсталанă кӳлепесем чылай. Пурте тĕрлĕрен: кăмпа, хĕрача, кушак, футболист... Чăнах та ăста алăллă-çке çамрăк маçтăрсем.

Пултарулăхăн пур енне тенĕ пекех кăмăллакан Карина çитĕнсен çыравçă е ӳнерçĕ пулас ĕмĕтлĕ тесе шухăшланăччĕ. Анчах та черчен кĕлеткеллĕ те сăпайлă хĕр пĕрчи тĕлĕнтерчĕ: вăл маляр штукатур профессине алла илесшĕн иккен. «Унта вăй-хăват чылай кирлĕ-çке», – тесе асăрхаттарнине те тимлемерĕ вăл. «Эпĕ вăйлă вĕт!» – терĕ çеç. – Аттепе анне те çак енĕпе ăста. Манăн та вĕсен çулĕпе каяс килет», – çирĕплетрĕ шухăшне Карина. Вăйлăрах та тĕреклĕрех пулас тесе вăл спортпа та туслашнă. Йĕлтĕрпе ăмăртса чупассинче ăна çитекен çук та пуль халь.

## Туслăх – хаклă пурлăх



– Эпĕ телейлĕ! Манăн çывăх тус пур! – хавхалансах калаçрĕç класра вĕренекен уйрăлми туссем Катя Петровăпа Вероника Данилова. Вĕсем пĕр-пĕринпе чылайранпа туслă. Пĕр ача садне çӳренĕ. Ун чухнех ялан пĕрле пулнă. Кăсăкланăвĕ те, чун киленĕçĕ те пĕрешкел хĕрачасен. Спортпа туслăскерсем тăтăшах ăмăртусене хутшăнса малти вырăнсене йышăнаççĕ.

– Шкул чысне хӳтĕлесси, унăн ятне çӳлерех çĕклесси – пирĕн тӳрĕ тивĕç, – хăпартланса калаçаççĕ маттурсем.

Алĕçĕпе кăсăкланма та пĕрлех пуçланă вĕсем. Любовь Юрьевна ертсе пыракан кружока кашнинчех хавхаланса çӳреççĕ. Унта вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме вĕренеççĕ. Пĕрле ĕçленĕ чухне тем пирки те калаçма вăхăт тупăнать туссен.

– Манăн Вероника пек тус пулнишĕн питĕ хĕпĕртетĕп. Вăл тӳрĕ те çирĕп чунлă, сăпайлă, ырă кăмăллă тата лайăх вĕренет, – мăнаçланса калаçрĕ Катя. – Вероникăран тĕслĕх илмелĕх пур.

– Хăш пĕр чухне пире вĕрентекенсем класра тĕрлĕ парта хушшине лартаççĕ. Анчах эпир кайран пурпĕрех пĕрле вырнаçатпăр. Ара, пире пĕр-пĕринсĕр питĕ кичем-çке! – терĕ Вероника тусĕ çине кăмăллăн пăхса.

Пурнăçра çывăх тус тупни питĕ пĕлтерĕшлĕ тесе шухăшлаççĕ хĕрачасем. Вĕсем яланах пĕр-пĕрне пулăшма хатĕррине пĕлтерчĕç. Туслăха малашне те сыхласа хăварасшăн.

«Тантăш» вулакансене те: «Пирĕн пекех туслă пулăр!» – сĕнчĕç вĕсем.

Красноармейски районĕ,
Карай шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсем.**

## Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕ, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ, чăваш ачисен «Тантăш» хаçачĕ



**чăваш литературин классикĕ К.В. Иванов çуралнăранпа кăçал 125 çул çитнине халалласа «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» сăмахлăхпа ӳкерӳ пултарулăхĕн конкурсне ирттерессине пĕлтерессĕ.**

### Конкурс тĕллевĕсем:

– Ачасене чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн, аслă поэтăн К.В. Ивановăн çынлăхне, пархатарлă ăсталăхне тата ырă енĕсене курма, вĕсем çинчен тĕплĕнрех пĕлме хавхалантарасси.

– Илемлĕхе туякан шкул ачисене тупса палăртасси, вĕсене литература тата ӳкерӳ ĕçĕпе çывăхрах туслаштарасси.

– Çамрăк çыравçăсемпе ӳкерӳçĕсен пултарулăхĕпе ăсталăхне тата вĕсен тавракурăмне ӳстерме пулăшасси.

**«Çĕнĕ ятсем уçатпăр»** литературăпа ӳкерӳ пултарулăхĕн конкурсне Чăваш Республикинче тата Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче пурăнакан 8-11-мĕш классенче вĕренекенсем хутшăнма пултараççĕ.

### Ăмăртура çак номинацисем пулаççĕ:

1. **«Чи лайăх сăвă»**. Сăвăсенче Константин Иванов сăнарне тĕрлĕ енчен сăнарласа кăтартмалла. Конкурса компьютерпа пичетленĕ 3 сăвăран кая мар тăратмалла.

2. **«Чи лайăх эссе»**. Эссе теми: «Ырри усала çĕнтерет». Çыру ĕçĕнче пурнăçри тата Иванов хайлавĕсенчи Ырăпа Хаяр кĕрешĕвне кăтартмалла, Хаяр вăйлă пулсан та Ырри çĕнтерет философилĕ шухăша уçса памалла. Эссене компьютерпа А-4 форматлă шурă хут листи çинче, 14 шрифтпа, пĕр анлă (одинарный) интервалпа 5 страницăран ытла мар пичетлемелле. Страницăсене номерлесе тухмалла.

3. **«Чи илемлĕ ӳкерчĕк»**. Пĕр е тĕрлĕ тĕспе, кăранташпа е çуллă сăрăпа, е урăх мелпе Тăван çĕршывпа тĕнче культурине пысăк тӳпе хывнă К.В. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхĕнчи тĕрлĕ саманта е унăн хайлавĕсенчи геройсен ĕçне-хĕлне ӳкерсе-сăнласа памалла. Ӳкерчĕксен виçи 20х30 см А-4 форматран пĕчĕк пулмалла мар.

Чăвашла çырнă, компьютерпа пичетленĕ сăвăсемпе эссесене тата ӳкерчĕксене **2015 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен çак адрессемпе йышăнаççĕ:**

428000, ЧР, Шупашкар хули, Воробьев композиторсен урамĕ, 6 çурт, Чăваш наци конгресĕ, телефон:62-35-61. ЧНК электрон адресĕ: **conqress21@mail.ru**

428019, ЧР, Шупашкар хули, Яковлев проспекчĕ, 13 çурт, 6 хут, «Тантăш» хаçат редакцийĕ, телефонсем: 28-83-86. Редакцин электрон адресĕ: **tantas@list.ru**

Çамрăк авторсен конверт тата ĕç çинче «К.В. Иванов конкурсне» тесе палăртмалла, ĕçĕн питĕнче (титулĕнче) хайсен хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне, хăш шкулта тата миçемĕш класра вĕреннине, районпа (хулапа) республика (область) ятне чăвашла та вырăсла тата пултарулăх ăмăртăвне хатĕрлекен вĕрентекенĕн хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне тата кĕсье телефон номерне кăтартса çырмалла.

Жюри конкурс çĕнтерӳçисене уйрăммăн икĕ ушкăнра (8-9 тата 10-11-мĕш классенче) палăртать, вĕсен ячĕсене"Тантăш" хаçатра пичетлет.

Çĕнтерӳçĕсене тата вĕсене хатĕрленĕ вĕрентекенсене дипломсем тата парнесем парса чыслаççĕ. Илемлĕх енчен лайăх та паха хайлавсене «Тантăш» хаçатпа«Самант» журналта пичетлессĕ тата радио хумĕпе янăратаççĕ.

***Конкурс йĕркелӳçисем – Юлия АНИСИМОВА, Чăваш наци конгресĕн Президиумĕн пайташĕ тата Геронтий НИКИФОРОВ, Чăваш наци конгресĕн вĕренӳпе ăслăлăх комитечĕн пайташĕ, «Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕн председателĕ.***

**ПУЛТАРУЛЛĂСКЕР**

# Мĕн акатăн, çав шăтать



«Пултаруллă çын пур çĕрте те пултаруллă», – теççĕ. Çак сăмахсемпе килĕшмесĕр чăннипех те май çук. Пур çĕрте ĕлкĕрме, пуçарулăхĕпе палăрма ăçтан вăхăтне тупаççĕ тулькка? Çине-çине олимпиадăна, конкурссене, интернет-викторинăна хутшăнаççĕ. Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыни кăна мар, ваттисене те пулăшма тăрăшни савăнтарать. Сăмахăм Чурачăк шкулĕнче вĕренекен Кирилл Копеев пирки пырать-ха.

– Вăхăтпа тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Вара пур çĕре те çитĕн, – терĕ хастар Кирилл.

Ашшĕ географи вĕрентекенĕ пулнăран та пуль арçын ача тавралăхпа питĕ кăсăкланать. Тăван ялĕпе юнашар Тĕрер юханшывĕ юхса выртать. Ăна вĕсем ашшĕпе тĕпченĕ. Мĕнле ӳсен-тăран çитĕнни, мĕнле пулăсем пурри, тарăнăшĕ, юхăм хăвăртлăхĕ тата тем те пĕр кăсăклантарнă вĕсене. Çак тĕпчев ĕçĕпе вăл районта иртекен ăмăртура малти вырăн йышăннă. Ахальтен каламаççĕ пуль ĕнтĕ: «Мĕн акатăн, çав шăтать», – тесе.

– Географи предмечĕпе иртекен олимпиадăсенче пĕрре çеç мар çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ эпĕ. Мухтанса каламастăп. Нумаях пулмасть эпир хамăр çемьепе Урал тăрăхне тăвансем патне кайса килтĕмĕр. Тусем çине те хăпарса куртăмăр. Ара, тавралăха сăнаса çӳресси аттепе иксĕмĕрĕн юратнă иленӳ вĕт-ха! Çутçанталăк асамлă вырăнсемпе пуян иккен! Питĕ кăмăллăн таврăнтăм эпĕ унтан. Май пулсан татах та каяс шухăшсем пур, – савăнăçлăн каласа пачĕ арçын ача.

Кăçал Çĕрпӳ район пуçлăхĕн стипендине те илме тивĕçрĕ çиччĕмĕш класри Кирилл Копеев. Район центрне чĕнсе пысăк сцена çинчех медальпе чысланă ăна.

– Ку хыпара илтсен çав тери хĕпĕртерĕм! Хам та питĕ кĕтрĕм те ĕнтĕ, анчах мана пуçлăх стипендине пăрассах тесе шухăшламан. Халĕ Республика Пуçлăхĕн стипендине илме тăрăшмалла, – тет мăнаçланса маттур Кирилл.

Çирĕп тĕллевлĕ пулни пурне те савăнтарать. Çакăн пек маттурсене хамăр малашлăха шанса пама та юрать.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.

**СПОРТ**

# Асра юлнă ăмăрту

Çак шкулта чылай çул ĕçленĕ Василий Трофимович Трофимова хамăр тăрăхра çеç мар, районта та аван пĕлеççĕ. Вăл Тăван çĕршыв Аслă вăрçин ветеранĕ. Ăна фронтра хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн нумай наградăпа чысланă. Паллă педагог «СССР çутĕç отличникĕ» ята та тивĕçнĕ. Халь шкулта вĕренекенсем ун ятне ялан асра тытаççĕ, ăна халалласа тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ.

Ачасем Василий Трофимовича асăнса йĕлтĕрçĕсен йăлана кĕнĕ ăмăртăвĕнче тупăшнине паян та манаймаççĕ. Интереслĕ те хĕрӳ иртрĕ вăл. Çамрăк спортсменсем тĕрлĕ дистанцире тупăшрĕç. Чи малтанах пĕрремĕш-иккĕмĕш классен вĕренекенĕсем 100 метра чупрĕç. Çак дистанцире хĕрачасемпе арçын ачасенчен Карач шкулĕнчи Лена Смирнова, Шупашкарти Семен Кашаев çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Иксĕр метрлă дистанцие чупса 3-4-мĕш классенче вĕренекенсем хушшинче Кунерти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти Вадим Сорокинпа Катя Смолева пĕрремĕш вырăнсене йышăнчĕç. Асăннă шкулти Лидия Никоновăпа Лена Романова 5-7-мĕш тата 8-11-мĕш классенче вĕренекенсенчен 800 метрлă дистанцире чи лайăх кăтартусемпе савăнтарчĕç. 5-7-мĕш, 8-11-мĕш классенче вĕренекенсем 1200 метра чупса Кунерпе Карач шкулĕсенчи Максим Судаковпа Леша Михайлов палăрчĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломпа, кубоксемпе, медальсемпе чысларĕç. Кунер ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Валерий Юсов Кунер шкулĕнче вĕренекенсене баскетбол мечĕкĕ парса хавхалантарчĕ.

Куславккасем спорта юратаççĕ, унпа туслă яланах.

***Вячеслав ПЕРОВ.***

Куславкка районĕ,
Кунер шкулĕ.

# Хаваслă 2015 самант

**М.Федоровăн «Арçури» балладинче çакăн пек сăмахсем пур: «Хура лаша, ан хартлат, хурамаран ма хăран?» Вĕсене тĕпе хурса пушă клеткăсене илсе панă сăмахсемпе тултарăр:**




Ава–Ака–Арт–Ата–Бар–Бек–Ева–Ила–Ина–Ира–Кар–Кат–Оля–Рак–Рам–Рар–Ура–Шак.

Азан–Алар–Анар–Аноа–Анат–Арес–Аруй–Дата–Илес–Кара–Лаша–Полк–Рота–ТАСС–Тату–Толь–Урок–Утар–Урок–Хура–Шама.

Исеть–Красс–Ларни–Сатай–Такан–Урата.

Алапит–Арарат–Панама–Раката–Рапира–Рокада–Тирана–Хуняма.

Караташ–Красова.

Каренина–Ламинари–Романова–Серенада.

## Ребус




**Çакăнта тупмалли юмах вуланĕ. Тупсăмĕ мĕнле-ши?**

## «Тупмалли юмахсем, сăнавсем тата ваттисен сăмахĕсем» аванворд




1. Çуркунне ... васкаса иртерех вĕçсе килсен, çуркунне сивĕ килет (сăнав). 2. ... шыва кĕрсен, сивĕтет (сăнав). 3. Икĕрчĕк-кукăрчăк, утмăл ик кукăрчăк (туп.юм.). 4. Алăсăр, пуртăсăр çурт лартрĕ (туп.юм.). 5. Кунлăх çула тухсан, çичĕ кунлăх ... ил (ват.сăм.). 6. ...па суту-илӳ тума хушмаççĕ (ват.сăм.).

**Паллă тунă юпара кăçалхи çул символĕн ячĕ вуланĕ.**

## «Икĕ сăмах урлă» пуçватмăш

**Икĕ сăмах пуçватмăшра вырнаçнă та ĕнтĕ. Ыттисене пушă клеткăсене вырнаçтарăр.**




Вир–Пыл–Шыв–Тум–Хек.

Акăш–Апат–Арат–Арск–Асан–Виза–Дата–Карп–Каша–Меню–Метр–Пару–Рада–Рама–Рами–Рекс–Хурт–Шапа–Урам–Юман.

Колер–Курск.

Кетово–Партер–Раймов–Хурма.

*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*

Тантӑш
13-14 №№, 2015, апрель, 2





# Инкеклӗ выҫлӑх ҫулӗсем...

**Манӑн асанне, Нина Захаровна Андреева (Шишкова) 1933 ҫулта ҫуралнӑ, унӑн ачалӑхӗ вӑрҫӑ ҫулӗсене лекнӗ. Каламасӑрах паллӑ ӗнтӗ, ырри кӗтмен ӑна. Анчах темӗнле йывӑр пулсан та вӑл тӳснӗ, хуҫӑлса ӳкмен.**

**Эпӗ асаннерен унӑн ачалӑхӗпе ҫамрӑклӑхӗ ҫинчен ыйтса пӗлес терӗм.**

– Эй, Альбина мӑнукӑм, пулнах-ши вӑл, ҫамрӑклӑх? Пулман та тейӗн, – ассӑн сывларӗ асанне. – Эпӗ ҫичӗ ҫулта чухне Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи пуҫланчӗ. Вӑрҫӑ, выҫлӑх. 1938-1939 ҫулсенче вара (ун чухне пӗчӗк пулнӑ эпӗ) пирӗн аттене, Захар Владимирович Шишкова, арестлерӗҫ.

**– Мӗншӗн?**

– Тен, пуян хресчен пулнӑран... Кайран такам ӑмсаннӑран ҫӑхав ҫырнӑ тесе те каларӗҫ, «халӑх тӑшманӗ» вырӑнне хунӑ терӗҫ.

**– Асанне, эсӗ аҫуна астумастӑн та пуль?**

– Ҫук, кӑштах астӑватӑп. Аттене килтен илсе тухса тасҫта илсе кайни халӗ те куҫ умӗнче. Ун чухне пирӗн кӳршӗ Борис мана хулпуҫҫи ҫине лартрӗ те эпӗ ҫӳлтен пӑхса аттене ӑсатрӑм. Ӑҫта? Мӗншӗн? Кӑна никам та пӗлмерӗ. Ҫапла аттене илсе кайрӗҫ. Аннен, Анна Петровна Шишковӑн, икӗ ывӑлне Бориспа Валентина, икӗ хӗрне Фенечкӑпа мана пӗччен ура ҫине тӑратмалла пулчӗ.

**– Асатте таврӑнчӗ-и?**

– Нумай вӑхӑт хушши унран нимӗнле хыпар та пулмарӗ. Следстви виҫӗ уйӑха тӑсӑлчӗ, унтан суд пулчӗ. Суд хыҫҫӑн аттене Кемӗр облаҫӗнчи тӗрмене виҫӗ ҫуллӑха хупрӗҫ. Тӗрмере ларни, выҫлӑх, сивӗ, тӗрлӗрен чир-чӗр – ҫакӑ йӑлтах аттене «кӑшланӑ». Вӑл туберкулезпа чирлесе вилнӗ.

**– Вӑрҫӑ мӗнле пуҫланнине астӑватӑн-и, асанне? Кив Атикасси ялӗнче мӗн пулса иртетчӗ?**

– Эпир ун чухне ҫак вырӑнтах, ҫул хӗрринче пурӑнаттӑмӑр. Анчах пӳрчӗ урӑххиччӗ. Астӑватӑп-ха, ҫул ҫинче, пирӗн кил ҫывӑхӗнче, ял ҫыннисем пуҫтарӑнса упӑшкисене, ывӑлӗсене, пиччӗшӗсемпе шаллӗсене, тӑванӗсене вӑрҫӑ хирне ӑсататчӗҫ. Чӑвашла юрлатчӗҫ, ташлатчӗҫ тата... йӗретчӗҫ, йӗретчӗҫ... Хӗрарӑмсем саппунӗсене ҫӗклесе йӳҫӗ куҫҫульне шӑлатчӗҫ. Ҫав вӗри тумламсенче ырату, калайман сӑмахсем... «Эпир вӑрҫа каятпӑр, унта пирӗнтен консерв тӑвӗҫ ӗнтӗ...» – тетчӗҫ арҫынсем. Эпӗ, пӗчӗк хӗрача, пӗтӗмпех сӑнаса, итлесе тӑратӑп. Мӗнле-ха вӑл, «ҫынсенчен консерв тӑваҫҫӗ»? Арҫынсем арӑмӗсене ыталаҫҫӗ, чуптӑваҫҫӗ, ачисене алла илсе ҫӳлелле ҫӗклеҫҫӗ, куҫран тинкереҫҫӗ. Эпӗ ҫав вӑхӑтра хамӑн аттене аса илетӗп. Куҫҫуль хӑех тумлать, ӑна чарма ҫук... Чун ыратать, ҫакна сӑнама мана, «халӑх тӑшманӗн хӗрне», питӗ йывӑр... Вӑрҫа каякансемпе пуринпе те пирӗн кил умӗнче сывпуллашатчӗҫ. Фронта вунсаккӑр тултарнӑ каччӑсем те, хӗрсем те каятчӗҫ.

**– Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ачасем шкулта вӗренетчӗҫ-и?**

– Пирӗн ялта шкул пурччӗ. Вӗрентекен Прасковья Николаевна ятлӑччӗ. Вӑрҫӑ кӗрлеме тытӑнсан ӑна та фронта илсе кайрӗҫ. Унтан вӑл аманса, халсӑрланса таврӑнчӗ, туяпа ҫӳретчӗ. Пире пӗлӳ паратчӗ. Унӑн сӑмахӗсене халӗ те астӑватӑп: «Вӗренӗр, тӑрӑшӑр, ҫын пулӑр!» Вӑл темӗнле халсӑр пулсан та кашни вӗренекен патне пыма вӑй тупатчӗ. Прасковья Николаевна йывӑррӑн асапланса вилчӗ. Эпӗ ҫакна йӑлтах куртӑм, мӗншӗн тесен вӑл пирӗнтен инҫе мар пурӑнатчӗ. Пӗтӗмпех вӑрҫӑ айӑплӑ, хӗрарӑмӑн суранӗсем пысӑк пулнӑ ӗнтӗ. Ялта ӑна сиплеме сыватмӑш та, тухтӑр та ҫукчӗ.

**– Кайран сире кам вӗрентрӗ?**

– Ольга Федоровна. Вӑл Штанаш ялӗнченччӗ. Кӗркуннеччӗ, питӗ сивӗ. Вӗрентекен манӑн алӑсене тытса ӑшӑтатчӗ. Эпӗ вара питӗ ҫӑмӑл тӑхӑннӑ, пусри тутӑр та ҫӳхескер ҫеҫ, калпак ҫукчӗ. Тен, ҫавӑнпах манӑн ӗмӗр тӑршшӗпех пуҫ ыратать пуль. Ҫапла ҫӳреттӗмччӗ шкула.

**– Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чи хӑрушши мӗнччӗ вара?**

– Выҫлӑх. Ҫав асаплӑ ҫулсене нихӑҫан та манас ҫук. Выльӑх-чӗрлӗхрен пирӗн темех ҫукчӗ вӗт. Сурӑхсем пурччӗ. Анчах пичче вӗсене Иваново облаҫне торф кӑларма кайиччен пусрӗ. Унтан ӑна, Валентина, фронта илсе кайрӗҫ. Вӑл така ашне тӑварласа хурана вырнаҫтарнине астӑватӑп. Ҫав аша ҫинине вара астумастӑп. Пирӗн хурансене вӑрланӑ иккен.

**– Мӗнпе пурӑнаттӑр?**

– Малтан пирӗн ҫӗрулми пурччӗ. Ҫавна ҫисе пурӑнаттӑмӑр. 1941-1942 ҫулсенче ялта Мускавран тата Ленинградран куҫарса килнӗ хӗрарӑмсемпе ачасем питӗ нумайччӗ. Пирӗн килте те пурӑнатчӗҫ вӗсем. Пӗри Полина ятлӑччӗ, икӗ ачаллӑскер, Мускавран. Тепри – Татьянӑччӗ, пӗр ачаллӑ, Ленинградран. Ҫемье пысӑк, пурин те ҫиес килет. Кашниех хӑйӗншӗн тӑрӑшатчӗ. Пирӗн ҫӗрулмие те вӗсемех ҫисе ячӗҫ. Колхоз нимӗн те параймастчӗ, мӗн пуррине фронта ӑсататчӗҫ. Астӑватӑп-ха, ҫав хӗрарӑмсенчен пӗри мана хирӗҫ турчка йӑтса пычӗ, эпӗ вара кӑмака ҫинче ларатӑп.

**– Мӗншӗн ҫапла хӑтланчӗ вӑл?**

– Кӑмака ҫинчен анса ҫӗрулми ҫиесрен. Нимӗнле апат та ҫукчӗ. Эпир Фенечка йӑмӑкӑмпа хуранта хамӑрах шывран тата темӗнле курӑкран «яшка» пӗҫереттӗмӗр. Тӑвар та ҫукчӗ. Унтан эпӗ питӗ вӑйлӑ чирлерӗм. Вилме пуҫланӑскере мана ҫенӗкри кравать ҫине хучӗҫ. Анчах Турӑ мана йышӑнмарӗ, Ҫӑлавҫӑ ярса пачӗ. Ҫав ҫын – Тайков.

**– Кам вӑл? Сирӗн пата мӗнле лекрӗ?**

– Атте Кемӗр облаҫӗнче тӗрмере ларнине каларӑм вӗт-ха. Вӗсем унта пӗрле пулнӑ иккен. Вилес умӗн атте Тайкова пирӗн ҫемьене пӑхкаласа тӑма ыйтнӑ. Ӑна, тухтӑр пулнӑ май, Упукушкӑнь сыватмӑшне янӑ. Ҫапла вӑл сыватмӑша кайнӑ чухне ҫула май пирӗн пата кӗрсе тухас тенӗ... Эпӗ ҫакна, паллах, астумастӑп. Тайков мана халсӑрскере курнӑ та сыватмӑша илсе кайнӑ. Уйӑх хыҫҫӑн уйӑх иртрӗ. Мана тухтӑрӑн арӑмӗ Настя пӑхса тӑратчӗ. Вӑл япӑх куратчӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чылайӑшӗ трахомӑпа (куҫ чирӗпе) чирлетчӗ. Ялта ҫынсем хӗрлесе хӑрушланнӑ куҫсемпе ҫӳренине астӑватӑп.

Эпӗ, вилӗмрен ҫӑлӑннӑскер, чӗрӗ юлтӑм. Ура ҫинче аран тӑратӑп, утма пултараймастӑп. Пӗр чӗптӗм вӑй ҫук. Ҫав уйӑхсенче эпӗ утма та, калаҫма та манса кайнӑ. Настя мана пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн пӗтӗмпех вӗрентрӗ. Унӑн ҫӑпатисене тата хамӑн ҫара урасене темшӗн питӗ аван астӑватӑп... Унтан атте килӗ, Фенечка йӑмӑкӑм, унӑн вилӗмӗ... Эпӗ ҫаплах халсӑрскер килте кравать ҫинче выртатӑп, Фенечка вара: «Вилетӗп», – тесе пӑшӑлтатать. Унтан вӑл сӗтел айне кӗрсе кайрӗ: ҫӑварӗнче – кушак пӑрҫи курӑкӗ, аллинче – ҫеҫӗ. Ҫавӑнта, атте сӗтелӗ айӗнче, вилсе кайрӗ те вӑл.

Анне ҫав вӑхӑтра Вишенерте ӗҫлетчӗ, вӗсем унта окоп чаватчӗҫ. Хӗрӗ вилни ҫинчен кам каланӑ-ши ӑна, пӗлместӗп, анчах вӑл килчӗ. Йӑмӑкӑма пытарма ҫӑва ҫине хӗрарӑмсем кӑна кайрӗҫ, мана та пӗрле илчӗҫ. Вилтӑприне ҫӗрпе хупланӑ чухне мана таптама ыйтрӗҫ. Эпӗ ҫӗре таптама пуҫларӑм, хам вара пӗрре ӳкрӗм, тепре... Ҫакна курса тӑракан кӳршӗ хӗрарӑмӗ: «Кӑна та часах пытармалла пулать ӗнтӗ. Атьӑр халех, ҫӑва ҫине тепре килсе ҫӳриччен», – терӗ. Ҫав сӑмахсем халӗ те хӑлхарах янӑраса тӑраҫҫӗ.

**– Чӗрӗ юлма мӗн пулӑшрӗ?**

– Ун чухне кашни килтен ҫулталӑкне ҫӗр ҫӑмарта, вунӑ килограмм услам ҫу (ӗне пур-и, сук-и – пӗрех), махорка, чӑлха, алсиш пуҫтаратчӗҫ. Ҫакна пӗтӗмпех колхоза памаллаччӗ, унтан фронта ӑсататчӗҫ. Ӗне пуррисем лайӑххах пурӑнатчӗҫ пек, халӗ ҫапла туйӑнать мана, анчах вӗсене те йывӑр пулнӑ ӗнтӗ. Пирӗн ампар та, арман та пурччӗ, анчах анне вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пӗтӗмпех сутса ячӗ. Пӗр ҫулхине пӗтӗм ҫӗрулмие ҫисе ярсан лартмалӑх та юлмарӗ. Аннепе таврари ялсенче ыйткаласа ҫӳреттӗмӗр. Ҫапла эпир тепӗр ҫул та пурпӗрех ҫӗрулми лартрӑмӑр.

**– Хӑш ялсене ҫӳрерӗр?**

– Ӑҫта кӑна ҫитмен пуль, выҫлӑх тасҫта та хӑвалатчӗ. Кӳршӗ ялсенче те, Сӑр леш енче те, Кӑрмӑшра пултӑмӑр. Темӗн те куртӑмӑр, темӗнле ҫынна та тӗлпултӑмӑр. Чухӑнсем... Чухӑнсем... Йӗри-таврах... Астӑватӑп-ха, пӗр ҫемье мана хӑй патне илсе пӑхса ӳстересшӗнччӗ. Хӑйсен ачи-пӑчи ҫукчӗ пулас. «Эсӗ ӑна пурпӗрех лайӑх пӑхаймӑн, хӗрачу вилсе кайӗ», – терӗҫ вӗсем аннене. Анчах анне мана хӑвармарӗ.



**– Ялта ытти ҫынсем вара мӗнле пурӑнатчӗҫ?**

– Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче выҫлӑха пула пирӗн ялта пӗтӗмпе 78 ҫын вилнӗ. Тӗпрен илсен, ачасемччӗ. Ӗҫлетчӗҫ пулин те пурте япӑх пурӑнатчӗҫ. Ҫу каҫипе колхоз валли утӑ хатӗрлетчӗҫ, август уйӑхӗнче ҫурлапа тухса тырӑ пухса илетчӗҫ, сентябрь вӗҫӗнче ҫӗрулми пуҫтаратчӗҫ.

**– Выҫӑ ҫынсем мӗнле ӗҫлетчӗҫ вара?**

– Колхоза ҫӳрекене кӑштах та пулин ҫитеретчӗҫ. Ҫавӑнпа эпир кашни кунах ӗҫе тухма тӑрӑшаттӑмӑр. Колхозра пысӑк хуранра ыраш яшки пӗҫеретчӗҫ. Ачасене пӗр ҫӑпала, аслисене иккӗ паратчӗҫ. Иккӗмӗш класа куҫсан аслисемпе танах ӗҫлеме пуҫларӑмӑр. Пӗр ҫӑпала шӗвӗ яшкашӑн пӗтӗм нормӑна пурнӑҫлаттӑмӑр. Вӑй ҫук, анчах ӗҫлемелле: хамӑршӑн, фронтшӑн. Тыр-пула патшалӑха параттӑмӑр. Йӗтем ҫинче хӗрарӑмсемпе ачасем вӑй хуратчӗҫ. Колхоз кӑштах та пулин тырӑ парсан кашни пӗрчине шутлаттӑмӑр, ылтӑн вырӑнне хураттӑмӑр. Ҫӑкӑра пурте питӗ хисеплетчӗҫ. Выҫлӑх мӗне пӗлтернине кашниех ӑнланатчӗ...

Тӑваттӑмӗш класс хыҫҫӑн аслисемпе пӗрлех утӑ ҫулма тытӑнтӑмӑр. Ҫавине ҫапаканӗ те кирлӗччӗ вӗт... Ҫав вӑхӑталла салтаксем яла таврӑнма пуҫларӗҫ: аманнисем, алӑсӑр е урасӑр юлнисем. Вӗсем те самаях пулӑшатчӗҫ-ха. Пире хирӗҫле Яковлевсем пурӑнаҫҫӗ-ҫке, вӗсен аслашшӗ вӑрҫӑран пӗр урапа ҫеҫ таврӑнчӗ. Вӑл пире нумай пулӑшрӗ, никама та хирӗҫлеместчӗ, лайӑх ҫынччӗ. Ун пеккисем сахал халӗ.

Ачасем ытларах чухне утӑ пуҫтаратчӗҫ. Кашни кунах кӗрепле шӑлӗ катӑлатчӗ те эпир пулӑшу ыйтса чупкаласа ҫӳреттӗмӗр. Совет салтакӗсем ирсӗр фашистсене ҫӗнтерме пуҫласан ялти пурнӑҫ кӑштах лайӑхланчӗ: шӗвӗ яшка мар, ҫӑра пӑтӑ ҫиме тытӑнтӑмӑр. Майӗпен ура ҫине тӑтӑмӑр эпир, вӑй пухрӑмӑр, вилсе те чӗрӗлтӗмӗр...

**Ҫапла йывӑр та асаплӑ пурнӑҫа чӑтса иртнӗ манӑн асанне. Ӑна итленӗ хыҫҫӑн ҫапла пӗтӗмлетӳ тумасӑр май ҫук: паянхи тулӑх пурнӑҫпа пирӗн савӑнса кӑна пурӑнмалла.**

***Альбина АНДРЕЕВА,***
***9 класс.***

Хӗрлӗ Чутай районӗ,
Ҫӗн Атикасси шкулӗ.

**Сӑнӳкерчӗксенче:** 1937-1939 ҫулсем, асаннен ашшӗне Захар Шишкова арестличчен. Асанне кунта алӑри ача кӑна.

Манӑн асаннен, Нина Захаровна Андреевӑн (Шишковӑн), наградисем.

# Чăваш юрри-ташшипе асра юлчĕç уявсем

**Хĕл кунĕсем тахçанах иртсе кайрĕç ĕнтĕ. Халĕ таврара çуркунне хуçаланать. Мĕнпе асра юлчĕ-ха хĕл Иркутск чăвашĕсемшĕн?**



Чăвашсем – наци хăйевĕрлĕхне паянхи кунччен те улшăнусăр тенĕ пекех сыхласа хăварнă халăхсенчен пĕри. Ку авалхи йăла-йĕркери мешехесенче лайăх палăрать. Вĕсене чăвашсем паян та тытса пыраççĕ.

Çулталăк пуçламăшне вĕсем хĕллехи йăла-йĕркепе паллă тăваççĕ. 2015 çул пуçланнине те Иркутск чăвашĕсем «Сурхурие» уявласа кĕтсе илчĕç. Вăл пĕр эрнене тăсăлчĕ.

Уяв Зимински районĕнчи Успенски-3 поселокра иртрĕ. Тĕрлĕ тум тăхăннă çамрăксемпе ачасем килĕрен çÿресе юрăсем юрларĕç, выльăх-чĕрлĕх лайăх ĕрчеме ырă сунчĕç. Кил хуçисем сурхури ачисене тутлă апат-çимĕçпе савăнтарчĕç.

Кашни киле кĕрсе тухнă хыççăн вĕсем ятарлă çурта (поселокри Культура çуртĕ) кайрĕç. Пухнă апат-çимĕçпе сăйланчĕç. Каçхулĕм ялти пур çамрăк та çак çурта улах ларма пухăнчĕ.

Тепĕр хĕллехи йăла-йĕркепе килĕшÿллĕн январьте «Раштав» уявĕ иртрĕ. Унта кÿршĕ ял-салари чăвашсем çеç мар, Зима, Саянск, Ангарск тата Иркутск хулисенчен те йышлăн пухăнчĕç. Хаваслă тăван юрăкĕвĕпе, ташă-вăйăпа асра юлчĕ çак кун.

Нумай пулмасть вара пирĕн тăрăхри чăвашсем авалхи йăла-йĕркене – «Ларма» – ирттерчĕç. Вăл пирĕн чи юратнă уявсенчен пĕри. «Ларма» кĕркунне, уй-хир ĕçĕсем вĕçленсен пуçланать те хĕл тăршшĕпех пырать. Мăнкун (авалхи чăвашсен календарĕпе – çуркуннехи çĕнĕ çула кĕтсе илни) е Çăварни умĕн çеç вĕçленет.

Кăçал «Ларма» ирттерме çамрăксем Залари районĕнчи Тагна салинче пухăнчĕç. Хаваслă та кăсăклă иртрĕ вăл.

Çак мероприятисене хутшăннисем, хăнасем уявпа кăмăллă юлчĕç. Тĕрлĕ çĕртен пухăннă хорпа юрлакан чăваш ушкăнĕсен юрри-ташшипе киленчĕç вĕсем. «Йăмра», «Телей» чăваш халăх ансамблĕ, «Савăнăç» (Новолетки сали) тата «Юрай» (Успенск поселокĕ) ача-пăча ансамблĕсем, «Куккук» (Залари районĕ, Тагна сали) чăваш фольклор ансамблĕ хăйсен пултарулăхĕпе тыткăнларĕç.

Çак уйăхра вара Иркутскри Сукачев кил-çуртĕнче (усадьба) чăвашсем хĕллехи уявсене «Улах» ларма пуçтарăннипе вĕçлерĕç. Улаха чĕннĕ хăнасем хăйсене авалхи вăхăта таврăннăн туйрĕç, чăвашла илемлетнĕ кил-çурта курса, «Илем» (Иркутск) ансамбль шăрантарнă авалхи чăваш юррисене итлесе киленчĕç. Пуханнисем чăваш вăййи-куллине, юмăç пăхнине курма тата унта хутшăнма пултарчĕç. Халăх ташшине вĕренме те май пулчĕ уявра.

Новолетники салинчи тата Успенски-3 поселокĕнчи ачасем валли Тагна ялĕнче вырнаçнă Этнографи музейĕнче экскурси йĕркелерĕç. Унта хĕрачасемпе арçын ачасем Заларински район тăрăхĕнче тупнă экспонатсемпе паллашрĕç. Чи асра юлни вара – чăваш халăх культурине сăнланă пÿлĕмре пулса курни. Ачасем пулăхлă Çĕпĕр çĕрне 110 çул каялла куçса килнĕ авалхи чăвашсен тумĕпе, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, ĕç хатĕрĕсемпе кăмăлтан кăсăкланчĕç.

***«Иркутск облаçĕнчи «Юлташ» чăвашсен наципе культура автономийĕ» обществăлла организаци материалĕнчен.***

# Иртнисĕр пуласлăх çук

Кашни сыннăн çуралнă тăван тавралăх пур. Маншăн вăл – Аксу районне кĕрекен Çĕнĕ Тимушкел сали. Кунта вырăссем, чăвашсем тата тутарсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Вĕсем авалхи йăла-йĕркене тытса пыма тăрăшаççĕ. Тăван халăх уявĕсем пирки те манмаççĕ. Ялти ватăсем çамрăксене вĕрентсе, сĕнÿ-канашпа пулăшса пыраççĕ.

Малтан пирĕн салана Бердебяково тенĕ. Унта тĕне кĕмен 37 чăваш пурăннă. Халĕ вĕсен йăхĕсем Çĕнĕ Тимушкелте кун кунлаççĕ, ĕçлеççĕ. Паянхи кунччен те вĕсен ячĕсем, тĕне кĕмен чăвашсен масарĕ сыхланса юлнă. Бердебяковăна ытти район çыннисем те куçса килнĕ. Вĕсем те чăвашсем пулнă.

Халапа ĕненсен Тимушка ятлă арçын хăйĕн çемйипе – Маден арăмĕпе тата Пирдебек хĕрĕпе – вăрманти уçланкăри вар хĕрринче тĕпленнĕ. Çак уçланкăна вĕсем Кивĕ ял тесе калама пуçланă. Тавралăх шурлăхлă, çăра вăрманлă пулни пирки çемье урăх вырăн шыранă. Вара Тарсы юханшыв хĕрринче çурт лартса тĕпленме шухăшлаççĕ. Вĕсем хыççăн унта тата темиçе чăваш çемйи куçса килнĕ.

Ялта ытларах тĕне кĕмен чăвашсем пулнă. Руçре пурне те тĕне кĕртме йышăнсан ял икке – Кивĕ тата Çĕнĕ Тимушкеле – пайланать. Пĕрремĕшĕнче тĕне йышăннă, тепринче тĕне кĕмен чăвашсем пурăнаççĕ.

Ĕлĕк-авал çак тăрăхри çĕрсем Минаев улпут аллинче пулнă. Ватăсем каланă тăрăх вăл православи праçникне, Троицăна, уявлама питĕ юратнă. Улпут çемйипе кашни çул Çĕнĕ Тимушкеле виçĕ лашаллă кÿмепе килнĕ тет. Çак пысăк уява ял



хĕрринчи çеремри юманлăхра паллă тунă. Салара улпутăн чаплă çурчĕ тата сачĕ те пулнă. Халĕ çав вырăнта акаци тĕммисем ÿсеççĕ.

Хальхи вăхăтра Çĕнĕ Тимушкелте тĕне кĕнĕ чăвашсем те йышлăн пурăнаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ ыр-усала ĕненекен аслашшĕ-асламăшĕн йăлийĕркине манмасть. Хăш-пĕр ватăсем халĕ те хăйсен несĕлĕсен тĕнне çирĕп пăхăнаççĕ.

Минаев улпут сала хĕрринче чаплă çурт, йĕри-тавра йывăçсем лартнă. Халĕ çав вырăнта тырă тасатмалли, упрамалли çурт (зерноток) ларать.

Минаев хыççăн унăн çĕрĕсем Рогачев улпут аллине куçаççĕ. Çав вăхăтсем питĕ йывăр пулнă хресченсемшĕн. Хаяр улпут вĕсене шеллемен, нумай ĕçлеттернĕ.

1917 çулта çеç, халăх пăлхавĕсем пуçлансан, хресченсем тинех ирĕклĕн сывлаça яраççĕ.

1928 çулта ялта «Пуçламăш» колхоз йĕркеленет. Малтан унта темиçе хуçалăх кăна пулнă. Ĕç хатĕрĕсем те сахал – суха пуçĕ те йывăç сÿресем. Пурăна киле колхоза кĕрекен хуçалăхсем нумайлансах пынă.

1930 çулта вара ăна пĕрремĕш трактор, «Фордзон» панă. И.Артамонов ялти пĕрремĕш тракторист тимĕр утпа урам тăрăх пынă чухне çынсем калама çук савăннă. Хăшĕ-пĕри шикленнипе киле кĕрсе пытаннă.

Çĕнĕ Тимушкел малашне те чечеклентĕр. Туссем эсир те хăвăр ялăрпа хаçатра паллаштарăр!

Пирĕн пурин те иртнине пĕлме тăрăшмалла, унпа кăсăкланмалла тесе шухăшлатăп. Иртнисĕр пуласлăх та çук-çке.

***Дмитрий ЧУДИНОВ.***

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Çĕнĕ Тимушкел шкулĕ.

# Илемлĕ чечек çыххи кăмăла çĕклерĕ

Эпир шкулта тĕрлĕ уяв, мероприяти, конкурс-вăйă ирттерме юрататпăр. Паллă кунсене те манмастпăр. Акă нумай пулмасть мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе класпа пуçтарăнса пылак кучченеçпе чей ĕçрĕмĕр. Пирĕн класри каччăсем хĕрсене илемлĕ те илĕртÿллĕ чечек çыххи парнелесе кăмăла çĕклерĕç. Сĕтел хушшинчен тухсан ăмăртмалла вăйăсем вылярăмăр. Кайран ташă каçĕ пуçланчĕ. Питĕ хаваслă иртрĕ уяв. Пурте кăмăллă юлчĕç.

***Наташа ЕФАРОВА.***

Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Чăтăрлă шкулĕ.



## ПАЛЛĂ ÇЫН ПУРНĂÇĔНЧЕН

### Альберт ВАНЕЕВ (1933-2001)



Альберт Егорович ВАНЕЕВ 1933 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче Коми автономи облаçне кĕрекен Удор районĕнчи Буткан ятлă ялта çуралнă. 1951 çулта Альберт Косланри вăтам шкултан, 1955 çулта Коми педагогика институчĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. 1955-1957 çулсенче вăл – Совет Çарĕнче.

Çартан таврăнсан А.Ванеев пĕр хушă «Войвыв кодзув» журнал редакцийĕнче ĕçлет, 1958-1961 çулсенче СССР Наука Академийĕн Коми филиалĕн аспирантуринче вĕренет. 1963 çулта филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕн диссертацине хӳтĕлет.

1962 çултанпа – СССР Наука Академийĕн Коми филиалĕн наука сотрудникĕ, каярах – чĕлхе, литература тата истори пайĕн заведующийĕ. 2000 çултанпа – Раççей наука Академийĕн Уралти уйрăмĕн Коми наука Центрĕн аслă наука сотрудникĕ. А.Ванеев чылай хушă «Республика Коми» энциклопедине çырса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен координаци ушкăнне ертсе пынă.

Альберт Ванеевăн малтанхи сăвви, «Меч ужи войвылын» (Эп çурçĕрте çуралнă) ятлăскер, 1960 çулта пичетленнĕ. Унтанпа Коми вулаканне пултарулă сăвăç комилле тата вырăсла тухнă 20 ытла кĕнеке парнеленĕ. А.Ванеевăн пултарулăхĕнче уйрăмах сонетсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çакна унăн 1988 çулта кун çути курнă «Войвывса сонетъяс» (Çурçĕр сонечĕсем) кĕнеки те çирĕплетет.

Альберт Ванеев комилле Микеланджело, Данте, Петрарка, Шекспир, Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Есенин, М.Джалиль, Ахматова тата ытти паллă поэтсен хайлавĕсене куçарнă.

1968 çулта Альберт Егоровича Коми комсомолĕн премине парса чысланă. 1980 çулта вăл Коми АССРĕн И.А.Куратов ячĕллĕ Патшалăх премине илме тивĕçлĕ пулать. Кунсăр пуçне ăна 1988 çулта «Коми АССРĕн культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятпа хавхалантарнă. 1996 çулта Альберт Ванеева «Коми Республикин халăх поэчĕ» хисеплĕ ят панă.

Паллă поэт, куçаруçă тата литература тĕпчевçи 2001 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче вилнĕ.

### Уйăп

Хĕрлĕ пĕсехеллĕ харсăр уйăп,
Эс мĕнле пурнатăн питĕ сивĕ
чух?
Пит шăнни çинчен санран эп
ыйтмăп.
Тăхăнмашкăн санăн кĕрĕкӳ
те çук.

Эс, çанталăкран пач
хăрамасăр,
Хĕвĕшетĕн яланах итем çинче,
Сивĕне те шăрăха пăхмасăр,
Яланах вĕçетĕн куçăм умĕнче.

Уйăпăм, эс пĕртте
найкăшмастăн,
Пĕртте хурламастăн хăвăн
шăпуна.
Çурçĕртен вĕçсе тарса
кайманшăн
Тав тăватăп эп чунтан-вартан
сана.

*(Валери Туркайăн «Çиччĕрен – çиччĕ» кĕнекинчен).*



*© Александр ПЛЕХАНОВ* (Шупашкар) *ӳкерчĕкĕ.*

## ПИРĔН ПУЛТАРУЛĂХ

# Çумккапа Симба

(Юмах)

Пурăннă тет карчăкпа старик. Пĕртен-пĕр пуянлăхĕ те вĕсен юратнă кушак çеç пулнă. Çумкка çăмламас, куçĕ симĕсрех тĕслĕ, çавăнпа вăл питĕ илемлĕ. Ялта Çумкка хăйне валли тус тупнă. Симба ятлăскер ăна питĕ килĕшнĕ.

Пĕррехинче икĕ тус пулă тытма кайнă. Симба вунă пулă тытнă, Çумкка вара... Темшĕн ăнăçман ăна. Акă Симба киле кайма пуçтарăннă, анчах ăна юлташĕ чарма хăтланнă. «Тусăм, ан кай-ха, тархасшăн. Тăхтасам кăштах», – тенĕ Çумкка. Симба ăна итлемен, пурнĕрех кайнă.

Çумкка çаплах нимĕн те тытайман. Киле пуçтарăнсан çулне те тупайман, çухалсах кайнă. Акă вăл вăрмана кĕнĕ. Ăна тилĕ курнă та сăмах хушнă: «Кам эсĕ?» «Эпĕ кушак», – тенĕ Çумкка. Тилĕ ăна хăйĕн патне хăнана чĕннĕ. Килне çитсен Тилĕ хăнине сăйланма сĕннĕ: «Çи, тусăм. Ашкакай кăмăллатăн-и?» Кушак апатланма ларнă. Вара Тилĕ кăмака хыçне пытаннă та ылтăн çăмхине кăларнă, унпа вылянă. Çумкка çакна йăлтах асăрханă.

Тилĕ кушака килĕнче хăварнă та хăй апат шырама кайнă. Кушак çав вăхăтпа усă курма шут тытнă: çăмхине илсе хăйне çул кăтартма ыйтнă, вăл ăсталла каять, çавăнталла чупнă. Пăхать те: пĕр енче вăрман, теприниче – пӳртсем. Çумкка пӳртсем курăнакан еннелле ыткăнать. Киле кĕрсенех вăл çăмхине хуçасене парать. Вара старикки çăмхине сутса янă та уншăн нумай укçа илнĕ. Карчăкпа старик тата Çумкка тинех çителĕклĕ пурнăçпа пурăнма тытăннă.



*© Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ӳкерчĕкĕ.*

***Виктория ФЕДОРОВА.***

Тутарстан,
Аксу районĕ,
Кивĕ Саврăш шкулĕ.

## ИСТОРИРЕН

# Манăн çемье Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче темĕнле йывăр пулсан та совет салтакĕсем парăнман, паттăррăн çапăçса тăван çĕре сыхласа хăварчĕç.

Паян, каялла çаврăнса пăхнă май, фашизмпа кĕрешнĕ салтаксем çинчен мăнаçланса шухăшлатпăр. Çакна вĕсем йăлтах пирĕншĕн, пулас ăру сирена сассинчен шарт ан сиктĕр, бомба тата артиллери канонади ан кĕмсĕртеттĕр тесе тунă. Телее, çĕнĕ ăру çак вăрçă инкекĕсене курмарĕ. Пĕрисемшĕн ку истори çеç, теприсемшĕн – нихăçан манăçми пулăм. Вĕсем ăна ĕмĕрех асра тытĕç.

Вăрçă тискерлĕхне курса, асаплă вăхăтсене тӳссе ирттернĕ çын кашни çемьерех пур пуль. Манăн çемьере те çавăн пек çын пулнă. Вăл – мăн асатте, Константин Егорович Антонов, 1910 çулхи июнĕн 26-мĕшĕнче Чекмагуш районĕнчи Новосеменкино ялĕнче, хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕпе амăшĕ, Егор Антонович тата Агафия Ермолаевна, хутла пĕлмен. Ачалăх çулĕсем йывăр вăхăта çакланнă: революцичченхи пурнăç, хăруша революци пулăмĕсем, Граждан вăрçи, выçлăх çулĕсем. Мăн асаттен çак йывăрлăхсем витĕр йăлтах тухма тивнĕ. Вăл пĕрех хуçăлса ӳкмен. Ниме пăхмасăр çирĕп пĕлӳ илме ăнтăлнă.

Чи малтанах вăл тин кăна тăван ялта уçăлнă шкулта пуçламăш пĕлӳ илнĕ. Çемьери чухăн лару-тăрăва пула вĕренĕвне малалла тăсайман. Ирех ĕçе пуçăннă. Çав вăхăтсенче коллективизаци тапхăрĕ пуçланнă. Мăн асатте колхозра ĕçлеме тытăннă. Ĕçчен качча хăвăртах асăрханă та бригадир тивĕçне шанса панă. Темиçе çултан вара вăл колхоз ертӳçи пулса тăнă.

1935 çулта мăн асатте Нина Исламгареевна Сагдеевăна качча илнĕ. Тепĕр çулхине ĕçчен те тăрăшуллă арçынна Пушкăртри ял хуçалăх шкулне вĕренме янă. 1938 çулта вăл вĕренĕве ăнăçлă вĕçлесе Хĕрлĕ Камăра çар комиссарĕн тивĕçне пурнăçлама тытăннă. Мăн асатте çемйине те хăйĕн патне чĕнсе илнĕ, тăван ялтан аякра пурăнса ĕçлеме тытăннă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан ăна Чекмагуш район комиссариатне куçарнă. Чылай сывăх çынна фронта ăсатнă вăл. Хăйĕн те хăвăртрах вĕсемпе пĕрле каяс килнĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме ирĕк ыйтса рапорт хыççăн рапорт çырнă. Анчах унăн ыйтăвне 1942 çулта çеç тивĕçтернĕ. Килте мăшăрĕпе ачисем юлнă.

Шел, мăн асаттен фронтри пурнăçĕ çинчен эпир тĕплех пĕлместпĕр, çырăвĕсем упранса юлман. Вăл Беларусие ирĕке кăларассишĕн кĕрешни паллă. Унта ирсĕр фашиста пула мĕн чухлĕ çын пурнăçĕ татăлнă вĕт! Çакна эпĕ илемлĕ произведенисенчен тата документлă фильмсенчен пĕлетĕп. Вĕсен паттăрла ĕçĕ яланлăхах халăх асĕнче пурăнать. Çакна нихăçан та манас марччĕ, мĕншĕн тесен вĕсемпе пĕрле мăн асаттеçĕм те пулнă. Ман умра кивелсе сарăхнă виçĕ сăнӳкерчĕк выртать. Унта эпĕ мăн асаттене куратăп. Анчах мĕнле тĕлĕнмелле тата тĕрĕс мар пулать вĕт-ха: хăш чухне хут «пурнăçĕ» этемĕнничен вăрăмрах... Аслă шкултан вĕренсе тухни çинчен Свидетельство тата вилни çинчен çырнă хут: «...1944 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнче Константин Егорович Антонов Социализмла Тăван çĕршывшăн çапăçса, çар тивĕçне çирĕп пурнăçласа, паттăрла пуç хунă, Гомель облаçĕнче ĕмĕрлĕх канлĕх тупнă».

Мăн асатте вилни çинчен хут илсен мăн асанне пурнăç тăршшĕпе мĕн чухлĕ куççуль тăкнине пĕр Турă кăна пĕлет. Вăл çемье пуçĕсĕр, икĕ ачапа юлнă. Анчах мăн асанне йăлт тӳснĕ: ир пуçласа каçчен колхозра ĕçленĕ. Фронта салтаксене валли çимелли тата тумтир ăсатнă. Ырми-канми вăй хунăшăн ăна «1941-1945 çулсенче Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче тăрăшса ĕçленĕшĕн» медальпе чысланă. Вăрçă вĕçленсен мăн асанне хăйĕн пурнăçне ачисене тĕрĕс воспитани парас ĕçе халалланă. Темĕнле йывăр килсен те юратнă тĕпренчĕкĕсене ура çине тăратнă вăл. Хĕрĕ Лена вăтам пĕлӳ илнĕ хыççăн чылай вăхăт торф кăларнă çĕрте тăрăшнă, унтан сутуçа вĕреннĕ те пенсиччен лавккара ĕçленĕ. Манăн асатте, Клим Константинович, вăтам пĕлӳ илсен малалла вĕренеймен. Камăн та пулин хуçалăха тытса пымалла пулнă-çке. Вăл колхозра тĕрлĕрен ĕçре вăй хунă. Унтан ăна платниксен бригадине илнĕ, пенсиччченех колхозра тăрăшнă. Анчах пурнăçĕ ытла кĕске пулнă-çке.

Эпир аслă ăруи тăванăмăрсем умĕнче пуçа таятпăр, вĕсене яланах асра тытса пурăнăпăр.

***Анастасия АНТОНОВА,***
***7 класс.***

Пушкăртстан,
Чекмагуш районĕ,
Юмаш шкулĕ.

# Киле çитеймен çырусем...

## Лида Белова комсомолка тĕрмерен киле янă çыру

*«1943 çул, январĕн 7-мĕшĕ.*

*Салам, юратнă аттеçĕм, аннеçĕм, йăмăкăмпа ывăлăм. Сирĕн çырăвăрсене илсе вуларăм. Пĕрремĕшне те, иккĕмĕшне те… Хамăр шăпа пирки ним калама та пултараймастăп. Лагере яраççĕ пире е персе пăрахаççĕ. Пирĕншĕн ĕнтĕ пурпĕрех... Çакăн пек кун-кунличчен кусăмсене ĕмĕрлĕхех хупни аванрах та пулĕ. Ытлашшипех асап куратпăр, тÿсетпĕр. Çапах пуç усмастпăр. Тепĕр чухне пуласлăх пирки те ĕмĕтленетпĕр. Туятпăр, ĕмĕтленни, çунатланни ахалех пулать... Аттеçĕм, Германи çĕрĕ çине кайиччен тăван çĕртех выртса юлни пахарах мар-и-ха? Вилме пĕрре те хăрушă мар. Сире çеç шел... тата ывăлăма. Тепĕр хутчен çуллахи кунпа савăнса курасчĕ те... Сарă хĕвел тухнине, çул хĕрринчи курăксем, тырă пучахĕсем çинчи сывлăм тумламĕсем асамат кĕперĕ евĕр йăлтăртатнине, çĕнĕ кун пуçланнине сăнама май килмĕ çав. Çутçанталăк илемĕпе киленме çук çав салтаксен. Вĕсен аллинче çурла е сухапуç мар – пăшал е пулемет.*

*Ывăнни – пĕрре, сывăрманни – иккĕ, апатланманни – виççĕ. Ĕнтĕ миçемĕш кун пĕр ыйхăсăр ура çинче. Пурин те куçĕсем хĕрелнĕ, куç хупаххисем тăртаннă. Кашнин пуçĕнче пĕр шухăш – пурăнасчĕ... Çак вăрçăра миçе çын пĕтрĕ-ши? «Вăл çук та, ку çук. Аван çынччĕ», – тесе кулянатпăр паянлăха сывă пурăнакансем.*

**Сире пурне те ыталаса чуптăватăп – Лида».**

Лидия Белова Тăван çĕршывшăн паттăрла ĕçсем пĕрре мар тунă. Амăшĕ патне вара час-час çыру янă. «...Каçарăр, мана пула сывлăхăрсене пĕтеретĕр. Маншăн пăшăрханма кирлĕ мар тесе ялан асăрхаттаратăп та çав... Итлеместĕр», – тесе шăрçаланă кашнинчех.

1943 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче гитлеровецсем тĕрмерен комсомолецсене илсе тухнă та машинăна лартнă. Палăртнă вырăна çитеспе çамрăксем хуралçăна тĕп тунă та пурте çăлăнас тесе машинăран сикнĕ. Инкеке, тепĕр машинăра пыракан нимĕç салтакĕсем вĕсене пĕр шелсĕр пере-пере вĕлернĕ...

## Мария Дымченко шăрçаланă йĕркесем

*«1943 çул, январĕн 14-мĕшĕ.*

*Хаклăран та хаклă аппамсем! Киле таврăнас шанчăк питех те сахал. Пире ахăртнех персе вĕлереççĕ. Ах, ачамсене шел... Манăн тĕпренчĕкĕмсене, тархасшăн, ан пăрахăр. Вĕсем ашшĕсĕр çеç мар, амăшĕсĕр те юлаççĕ-çке... Эпир те çак çĕр çинчен кайсан пирĕн пирки: «Лăпкă çывăрăр. Акă эпир сирĕншĕн пуриншĕн те тăшмана тавăрăпăр. Юнпа шыва кĕрĕпĕр. Вĕсен вăй-хăват сахал, эпир çавсенчен икĕ-виçĕ хут вăйлăрах. Эпир çĕнтересси паллă. Пире хирĕç ыткăнса килекен «çĕленсем» кĕçех урлă-пирлĕ йăванма пуçлĕç», – тейĕç пирĕннисем.*

*Çапах та... пурăнас килет. Ниме пăхмасăр...*

**Мария».**

## Клава Ковалева шăрçаланинчен

*«1943 çул, январĕн 14-мĕшĕ.*

*Юратнă аннеçĕм! Енчен те атте ырăсывă юлсан кала, маншăн тавăртăр тăшмана. Паллă, киле таврăнаяс çуках... Çемье... Юлашки хут сирĕн пата çыру çыратăп. Ирĕксĕрех куççуль пăчăртанса тухать, питçăмартисем тăрăх шăпăртатса анать. Хытă кăшкăрса пурне те илтмеллех, тăраниччен пĕрех яма хатĕр эпĕ, анчах тÿсмелле, тÿсмелле! Хамăрăн пурнăçшăн, ирĕклĕхшĕн кĕрешмеллех! Телей пулсан, çын ниçта та пĕтмест, чăнлăх вилĕмрен хăтарать, тенĕ авалхи ватăсем. Тен, манăн шăпа та çапла пулса тухĕ?*

**Клава».**

## Виктор Петров чунĕнчен тухнă йĕркесем

*«1943 çул, январĕн 14-мĕшĕ.*

*Аннеçĕм, каçар. Нумай шухăшлататтăм сана. Тархасшăн, выçă ан лар. Манăн япаласене хĕрхенмесĕр сутса укçа ту. Авă сăмахран, кăçатă та аван хакпа каймалла. Тен, хаклă йышши сехете туянакан та тупăнĕ. Ун пекки пулсан, пĕр турткалашмасăрах илме килекене парса яр. Тепĕр хут калатăп, выçă ан пурăн... Аннеçĕм, яланах кулса çеç тăракан куçусем халĕ путса кĕнĕ ахăртнех, питçăмартисем те пĕркеленнĕ пуль... Хуйха пула. Анчах эпĕ çакăн пек саманара вăрмана кайса чĕрĕп пек чăмăртанса, çулçă айне кĕрсе выртас çуках. Пĕлетĕп, эсĕ те апла тума хушмастăн...*

*Чипер пурăн. Виктор».*

## Уля Громова тăван тăрăхне çырнинчен



*«1943 çул, январĕн 15-мĕшĕ.*

*Чипер юлăр, аттепе анне! Юратнă шăллăм, эсĕ те мана урăх кураймăн... ĕмĕрне те... Сана эпĕ час-час тĕлĕкре куратăп. Юратнă пиччем! Эпĕ вилетĕп... Маншăн ирсĕр тăшмана тавăрсам. Ах, çапăçăвĕ кашни кун кĕрлет. Кашни ялшăн, тĕрĕссипе – кашни метр çĕршĕн юн тăкăнать. Медсанбатра аманнисене йышăнма та, вĕсен суранĕсене тасатса, сиплесе, çыхса, каялла фронта ăсатма та ĕлкĕреймеççĕ. Чылайăшĕ çапăçу хирĕнчех куçĕсене ĕмĕрлĕхех хупать... Тăван çĕршывшăн...*

**Уля».**

## Люба Шевцова чунне уçнинчен

*«1943 çул, февралĕн 7-мĕшĕ.*



*Инçетре хура пĕлĕтелле тек-текех çутатакан ракетăсем вĕçсе хăпараççĕ те пĕрер минутран сÿнеççĕ. Пĕрисем сÿннĕ тĕле теприсем çĕкленеççĕ. Çав хушăра пулеметсем лакăртатса илеççĕ. Йытă вĕрнĕ пек. Акă, таçта снаряд ÿксе çурăлчĕ. Пĕрре, тепре тата тепре... Çапла, фронтра çĕрле те шăп пулмасть çав. Çĕрле те вĕлереççĕ, амантаççĕ, сиен кÿреççĕ. Вăрçăн хăрушă пырĕ нихăçан та тăранас çук пек туйăнать. Пĕрмай çăтать.*

*Аннеçĕм, каçар мана... Санăн хĕрÿ те ыттисем пекех хура çĕрпе хупланать ахăртнех… Тем пек пурăнас килет, анчах... манăн çамрăк пурнăçа вăрçă пĕтерчĕ.*

**Хĕрÿ – Люба».**

## Валентина Колесникова санитаркăн çырăвĕ

*«1943 çул, мартăн 3-мĕшĕ.*

*Чи çывăх тусăм, Нина! Енчен те эпĕ çакă çапăçура куçăмсене ĕмĕрлĕхех хупсан... Ку хыпара çийĕнчех аннене пĕлтерсем. Кала эсĕ ăна, маншăн кулянса куççульне ан типĕттĕр.*

*Шел паллах, пурнăçăм ир татăлать. Анчах маншăн тăшмана юлташсем тавăрасса шансах тăратăп. Нина, эпĕ медсестрара ĕçлерĕм, йывăр вăхăтра салтаксене пулăшу патăм. Çапах пурăнас килет, эпĕ ытла çамрăк-çке... Вăрçă пĕтнĕ çĕре кам чĕрĕ юлать – çав телейлĕ пулать те. Эпĕ вара вĕсен йышне кĕрейместĕпех...*

**Валя».**

Паттăр хĕр вăрçă пуçлансанах фронта лекме ĕмĕтленнĕ. Медсестрасене вĕрентекен курсран ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн унăн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ. Ăна хĕрÿ вырăна янă.

Вутлă-хĕмлĕ çапăçура мĕн чухлĕ салтак пурнăçне çăлса хăварман-ши вăл? Васкаса çыхса янă бинтсем витĕр юн сăрхăннине, çынсем ыйнăшнине, ниçта кайса кĕрейми асапланнине – йăлтах, йăлтах курнă вăл. Сестрасем сывлăш çавăрса илме ĕлкĕреймесĕр тенĕ пек, апат çинчен те, ыйхă çинчен те манса аманнисемшĕн тăрăшнă. Пĕрре канса лармасăр, пĕрре куç хупман кунсем тата мĕн чухлĕ пулман-ши? Утнă çĕртех тăканакан, куç хупсассăнах çывăракан та пулнă. Çапах медсестрасем инкеке лекнĕ салтаксене яланах вăхăтра пулăшу пама ăнтăлнă.

## Партизанка-разведчица Ольга Ржевская çырнинчен

*«Юратнă аннеçĕм! Ман пирки пăшăрханса сывлăхна ан пĕтерсем. Тен, эсĕ çапах Дусьăна кĕтсе илĕн. Тен, вăл манран телейлĕрех пулса тăван тăрăха çаврăнса çитĕ. Аннеçĕм, мана шăпам вилмех пÿрнĕ ахăртнех. Шăпаран иртейместĕпех ĕнтĕ.*

*Акă çыру çырнă май санăн сăнару куç умнех шуса тухрĕ, аннеçĕм. Çак самантра юнашар пулнă-тăк санăн ытамна чăмнă пулăттăм, ача чухнехи евĕр.*

*Аннеçĕм, тен, кунти лару-тăру лайăххи енне улшăнсан... Киле те тĕрĕс-тĕкел çитĕп-и? Ун пек пулсан мĕн тери телейлĕ пурăннă пулăттăмăр. Анчах... кунашкал ĕмĕт халапра çеç пурнăçланма пултарать. Юмахра мар вĕт эпир, чăн пурнăçра...*

*Умра – календарь... Вăрçăри пурăннă кунсене чĕрсе пыратăп. Пĕлес килет, тата мĕн чухлĕ пурăнма пÿрнĕ-ши мана?*

*Ах, манăн пурăнас килет. Чĕрене уçса калаçас пулсан, манăн пурăнас кăна мар, манăн ача амăшĕ те, мăнуксен асламăшĕ те пулассăм килет. Пĕр кĕтÿ мăнук сан тавралла чупни савăнăç мар-и-ха? Пурте çав мăнуксемшĕн çапăçаççĕ мар-и фронтра! Çавăнпа та манăн пурăнмалла… Вăрçă хыççăн киле таврăнса лайăх çынна качча тухса ача-пăчаллă пуласчĕ, асанне-кукамай ята илтиччен пурăнасчĕ. Анчах, çакă пысăк ĕмĕтĕм нихăçан та пурнăçа кĕреймессине чунпа-чĕрепе туятăп... Пытармалли çук, нимĕçсем сахал мар тумхахсемпе чăрмавсем тума тăрăшрĕç, такăнтарма хăтланчĕç. Анчах… ума лартнă тĕллевĕсене пурнăçлама ирĕк памарăм. Ĕнтĕ халĕ манăн вилĕмшĕн савăнаççĕ ахăртнех. Ир савăнаççĕ, маншăн вĕсене тавăракансем пулаççех вĕт-ха...*

**Ольга».**



1943 çулхи январĕн 6-мĕшĕнче фашистсен аллине лекнĕ пике. Ирсĕрсем унран темтепĕр ыйтса пĕлесшĕн çуннă, асаплантарнă. Анчах пике шăл шурри те кăтартман.

Февралĕн 27-мĕшĕнче тарăхнă офицерсем:

– Юлашки хут асăрхаттаратпăр, мĕн пĕлнине пире пĕлтерсем! – кăшкăрнă хайхисем. – Пĕрех вилмелле санăн!

– Эпĕ вырăс хĕрĕ, Ольга Ржевская, партизанка... Сире, путсĕрсене, чĕререн кураймастăп! Эпĕ сирĕнпе юлашки вăй пĕтиччен çапăçрăм. Манăн тăрăшулăха пулах сирĕн складсем хĕмленсе çунчĕç... Малашне те çунĕç... Салтакăрсемпе офицерăрсене те пĕрин хыççăн теприне тĕп турăм... Тараймарĕç манран. Ыран та, тепĕр кун та сирĕннисене пуля лексе çĕре ÿкерĕ. Шел, тата нумай ĕç туса хăвараймарăм. Кулянмастăп, маншăн туссем тавăрĕç сире! – тесе хыттăн кăшкăрнă... Çакă Ольгăн пурнăçĕнчи юлашки сăмахĕсем пулнă.

## Мария Кисляк çырса хăварнинчен

*«1943 çул, июнĕн 18-мĕшĕ.*

*Тăван çĕршывшăн вилетĕп! Чипер юлăр... Аттеçĕм, аннеçĕм тата Наташа аппам. Маншăн ан кулянăр... Мĕн кăна курмарăмăр пулĕ хĕрÿ çапăçура. Çынсем те епле тÿссе пурăнкаларĕç-ши? Ытла та хăрушă! Тĕрĕссипе, пурăннă темелле те мар çав. Нимĕçсем ялсенче нумай иртĕхнĕ. Халăхăн мĕн пуррине йăлт шăлса туха кайнă. Тырри-пулли, вылăхĕ-кайăкĕ, тумĕ-юмĕ, тÿшекĕ-минтерĕ таранчченех. Нумайăшне çакса вĕлернĕ, персе пăрахнă, çамрăкраххисене, ĕçлеме пултараканнисене, Германие чуралăха хăваласа кайнă. Килте юлнисем выçса, тĕрлĕ чирсемпе чирлесе вилнĕ.*

*Маншăн та юлташăмсем фашистсене тавăрĕç. Кашни кун, кашни сехетре, кашни утăмра! Вилĕм нимĕçсене, Гитлер хурахĕсене! Тусăмсене фашистсене ним хĕрхенмесĕр тавăрма, вĕсене пирĕн çĕр çинче пĕр çын юлмиччен пĕтерме, çапăçусенче арăслан пек паттăр пулма пăр сунатăп. Ах, вăрçă çулĕсем... Вĕçĕ-хĕрри çук пек туйăнать. Хăçан пĕтет ку вăрçă? Пĕрмай кашни сехетре, кашни кун вилĕмпе юнашар...*

**Мария».**

Маша вăрçă вăхăтĕнче хăй хваттерĕнче аманнă салтаксене сыватнă... «Суранланнисене çăласчĕ, вĕсен асапне çăмăллатасчĕ кăна. Хăшĕсем çине пăхсан, куççуль тухса каять, ытла та хĕрхенмелле-çке вĕсене. Ирсĕр çынсене пула нуша куратпăр-çке», – тесе кашнинех пулăшу пама васканă.

Гитлеровецсем ăна пĕррехинче ярса тытнă та çакма хатĕрленнĕ.

– Юлташсем! Нимĕçсене пĕр шелсĕр вĕлермелле! Ан манăр, эпир çĕнтеретпĕрех! – кăшкăрнă пике пурте илтмелле.

Унтан пĕтĕм халăх умĕнче ирсĕр тăшмансем Машăн пурнăçне татнă... Пăхса тăракансен куçĕсенчен куççуль шăпăртатнă...

**Элиза ВАЛАНС**

**куçарса хатĕрленĕ.**

# «Нăрăсем» сăмахкаçмăш



### 1-мĕш нăрă

**Сылтăмалла:**

1. «... çилсем» (М.Ухсай). 5. Раççейри халăх. 6. Кун-çул, ăраскал. 7. Тĕлĕнтермĕш, кĕтнĕ ĕмĕт.

**Аялалла:**

1. Тăхăрьяла кĕнĕ ял. 2. Йывăç. 3. Тăварлă шыв (хими). 4. ... Хачатурян (композитор).

### 2-мĕш нăрă

**Сылтăмалла:** 1. Чăваш çамрăкĕсен ĕлĕкхи «клубĕ». 5. Чиркӳ ĕмĕр сыхлакан тупра. 6. Чăвашсен «лайăх, хитре, кăмăллă тата ытти те» çывăх тăракан сăмах. 7. К.Иванов çырнă «Нарспи» поэмине куçарнă чухне пĕр поэт та «пуш» сăмаха урăхла ятпа çырайман.

**Аялалла:** 1. « Пирĕн ... анаталла, шуса анать пĕр çуна» (юрăран). 2. Вулакан «тамаши». 3. Ĕлĕкхи чăвашсен сунар йытти. 4. Çĕпĕрте пурăннă халăхăн ĕлĕкхи ячĕ.

### 3-мĕш нăрă

**Сылтăмалла:**

1. Лаша тĕсĕ (масть). 5. Нуша, терт, хĕн-хур. 6. Кил-çурт тавраш. 7. Шыв юххи май палăртакан вырăн.

**Аялалла:** 1. Хăй вăхăтĕнче Чилире асра юлнă поэт тата гитарист. 2. Вăрманти, урăх çĕршывсене вĕçсе кайман пирĕн патри кайăк. 3. Америка тăрăхĕсенче пурăнакан тĕве маййлă чĕрчун. 4. Çимĕç.

### 4-мĕш нăрă

**Сылтмалла:**

1. Килти выльăх. 5. Шăл. 6. Халăхăн пултарулăх палли. 7. Ĕлĕк чир-чĕре çав сăмахпа палăртнă.

**Аялалла:**

1. Чăваш чĕлхинчи хутшăну междометийĕ. 2. Тĕлĕнтермĕш, пĕлменни, тепĕр чухне çукки те. 3. Тăхăрьялсенчен пĕри. 4. Кĕске пурнăç саманчĕ.

### 5-мĕш нăрă

**Сылтăмалла:**

1. Йывăç вуллин пайĕ. 5. Ĕлĕкхи Раççей çарĕнчи лашаллă салтак. 6. Вулакан сирпĕтсе кăларнă хутăш. 7. Йăх, несĕл, кăк.

**Аялалла:**

1. «... сыпăк» (лингвистика). 2. Тусем хушшинче пурăннă тата халĕ те чĕрĕ кайăк. 3. Вулкан юлашкийĕ. 4. ... Кама (хула).

### 6-мĕш нăрă

**Сылтăмалла:**

1. Çамрăк вăрман. 5. Азербайджансен паллă артисчĕ. 6. Осман империйĕнчи чыслă тӳре-шара. 7. Тĕнчери чи вăрăм шывсенчен пĕри.

**Аялалла:**

1. Боксерăн хатĕрĕ. 2. ... кама. 3. Ăсталăх тĕсĕ. 4. Типсе пыракан кӳлĕ.

# «Кашни сăмахра «М» саспалли» сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Ӳнерçĕсем, чертеж тăвакансем усă куракан хытă хут. 4. Çĕр ĕçченĕн ĕç хатĕрĕ. 8. Тинĕс, океан шывĕ çине тухса тăракан çĕр лаптăкĕ. 9. Спорт е физкультура мероприятийĕ. 11. Чечек. 12. Çутçанталăкри илемлĕ, çирĕп чул. 13. Пĕчĕк çĕршыв. 15. Хура тата Азов тинĕсĕсенче пурăнакан карп йăхĕнчи пулă. 16. Чăвашла тухса тăракан журнал. 17. С.Асланăн повеçĕ. 19. Кикабидзе, Мкртчян вылянă асра юлмалли шӳтлĕ кинофильм. 24. «Хыпар» хаçатра тухса тăракан шӳтлĕ рубрика. 26. Хĕрлĕ сăрă. 28. Хĕллехи спорт вăййи. 29. Чăваш Республикинчи район центрĕ. 30. Шыв юхăмĕн чи пĕчĕк пайĕ. 31. Чăваш эстрада юрăçи. 32. К.Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарнă чăваш сăвăçи.

**Аялалла:** 1. Французсен паллă композиторĕ Ж.Бизе çырнă опера. 2. Чулăн е пăрăн пысăк татăкĕ. 3. Çулла тумланать, хĕлле пăрахать (туп.юм.). 5. Тĕрлĕ улма-çырларан хатĕрленĕ сĕтеклĕ ĕçме. 6. Муркаш районĕнчи ял. 7. Çамки хура, чĕлхи хĕрлĕ (туп.юм.). 8. Вăхăт виçи. 10. Казаксен пуçлăхĕ, ертӳçи. 13. «Çытар» сăмахăн тепĕр ячĕ. 14. ... Карягина (чăвашсен хальхи хĕрарăм сăвăçи). 18. Чăваш халăх поэчĕ. 20. Вăрçăсенче усă курнă сӳнми хаяр хутăш, шĕвек. 21. Грузинсен паллă хĕрарăм патши. 22. Европăри çĕршыв. 23. Çĕпĕрти тундра пайĕнчи çурутрав. 25. Карап çинчи шыв çул йĕркине ăста пĕлекен специалист. 27. Ĕлĕкрех «министр» сăмахăн тепĕр ячĕ. 28. Илпек Микулайăн «Хура çăкăр» романри сăнар.

# Пĕр ӳкерчĕкре – икĕ пуçватмăш

**Вĕсене шутлама сире кăранташ тата ластик кирлĕ пулĕ. Унта тупмалли сăмахсем пытаннă. Палăртнă юпара вара сăмахсем вуланĕç. Хальхинче вĕсен тупсăмне те тупмалли юмахсемпе йĕркелерĕмĕр.**



### Пĕрремĕш пуçватмăш

1. Вăрманта çуралать, килте макăрать. 2. Кăмака çинче кĕмĕл кушак ларать. 3. Хĕлле те, çулла та кĕрĕкпе. 4. Пĕчĕкçеççĕ пикече пĕтĕм хире çавăрать. 5. Тӳн-тӳн, тӳн карчăк, тӳн карчăкăн пин шăрпăк. 6. Салатсан, такмак пек, пуçтарсан пучах пек. 7. Лаши пĕчĕккĕ, çавах тинĕс хыçне çитнĕ.

***Палăртнă юпара – Мăйракинчен тытмасăр ĕç пулмасть.***

### Иккĕмĕш пуçватмăш

1. Çекĕл, çекĕл çеклетмĕш, йĕрĕх туртмăш, хутламăш. 2. Вăрăм алтăрăн тĕпĕ шăтăк. 3. Уйра ылтăн пуçлă ача ларĕ. 4. Пĕр енĕ хăмăшлăх, тепĕр енĕ çеçенхир. 5. Йăлт-ялт йăрсаккай, мăрт-март мăрсаккай. 6. Явман кантра, çимен утă. 7. Пĕчĕкскер, хитрескер, çĕр мăкăртса тухнăскер, пурçăн тутăр çыхнăскер.

***Палăртнă юпара – Сĕм вăрманта кĕсел тирки ларать.***

***Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.***

# Шурăмпине хăтарни

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем



© Юлия КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

Çулла аннепе пасартан хур чĕппи туянтăмăр. Туссем нумайланнăшăн питĕ савăнтăм. Вĕсене кашни кун апатлантаратăп, шыв ĕçтеретĕп. Сарăскерсем мана курсан хирĕç чупакан пулчĕç.

Шăп та лăп эрнерен хура чăх пĕр чĕпĕ кăларчĕ, çакă та маншăн савăнăç пулчĕ.

Ĕнер пĕр чăрсăр хур чĕппи чăх чĕппине хăваланине курсан – чăтаймарăм – шывпа сапрăм. Лешĕ самантрах тӳнсе кайрĕ. Хăраса алла илтĕм ăна. Хускалмасть, апла вилнĕ. Аннене мĕн каламалла-ши вара? Ятлать паллах. Икĕ тукмак пĕтрĕ-çке. Сарăскер пĕрене çине хутăм çеç, вăл йăшăлтатма тытăнчĕ. Урра! Чĕрĕлчĕ! Анчах хăрах ури çине пусаймасть. Мĕн тумалла? Пушă коробкăна ятăм вара.

Тепĕр кунне туссемпе урамра киленеттĕм. Сасартăк таçтан йытă тупăнчĕ те чăхха йăтса кайрĕ. Чĕп ниçта кайса кĕрейми шимплетет. Эпĕ те сĕрлеттерсе макăратăп.

– Мĕн пулчĕ? – чупса тухрĕ картишрен аппа.

– Илсе кайрĕç...

– Кама?

– Чăхха...

Аппа унталла-кунталла чупрĕ, анчах ним тума та пултараймарĕ. Ĕнтĕ чăх чĕппи тăлăха юлчĕ. Ялан шимплетет. Кулянать паллах. Хам пекех. Аптăранă енне ăна аманнă хур чĕппипе пĕрле ятăм. Иккĕшĕн валли те ят тупрăм: Хăрхăмпа Шурăмпи.

Кăшт вăхăт иртсен Шурăмпин ури тӳрленчĕ. Анчах ăна юлташĕсем йышăнмарĕç. Сăхаççĕ. Хăрхăмпа Шурăмпи иккĕшех çӳреме тытăнчĕç. Питĕ килĕштереççĕ.

Ĕнтĕ вĕсем ӳсрĕç. Пĕр кунхине хайхискерсене пĕве хĕрне илсе кайрăм. Шурăмпи самантрах шыва сикрĕ. Хăрхăм вара ниçта кайса кĕрейми унталла та кунталла чупкалама тапратрĕ. Юлташĕ шалалла ишме тытăнсан сикрĕ хайхискер шыва! Кулкаласа тăратăп. Чĕпĕ шăмпăлтатать кăна.

– Мĕн шăлна йĕрсе тăратăн? Путать вĕт! – кăшкăрчĕ çывăхра япала чӳхекен Маруç аппа.

Чĕрĕ чунсем пурте ишме пĕлеççĕ вĕт! Кур-ха, Шурăмпи епле савăнăçлă! Хăрхăм та нумайранпа шыв курманран çăвăнса тасалать авă. Кашни кун кĕл çинче йăваланать те хăй.

Сасартăк чĕпĕ кӳсран çухалчĕ. Тăнран каяттăм. Ăçта кайса кĕчĕ вăл?

– Маруç аппа! Хăрхăм киле каймарĕ пулĕ те? – терĕм ун çывăхне пырса тăнă май.

– Пĕтрĕ ĕнтĕ. Пулăшаймарăн.

– Суятăн! Курайсасăр çапла калатăн! – чĕрре кĕтĕм самантрах.

– Лисук, чăхсем шывра путаççĕ. Мĕнле ăнланман ача пултăн эсĕ?

– Мĕншĕн?

– Çавăнпа, – тесе шурă куçĕсемпе сиввĕн пăхрĕ.

Ĕненмерĕм. Пирĕн Хăрхăм паттăрскер. Аппа калашле вутра çунмасть, шывра путмасть. Маруç аппана кӳрентĕм. Пĕчĕккисене мĕн-ма ултала-малла?

Киле Шурăмпипе таврăнтăмăр. Пĕве хĕрринчи ĕç пирки асаннене пĕлтертĕм.

– Путнă вăл, – терĕ салхуллăн.

Чĕре çурăлса тухатчĕ...

Шурăмпи урамра пĕчченех кункунлакан пулчĕ. Ăна тата лайăхрах пăхма тытăнтăм. Хĕвелçаврăнăш вăрри те, çăкăр та, çĕрулми те çитеретĕп. Никам курман чухне чашăкпа турăх та лартса паратăп.

...Хĕл çитрĕ. Картишри хурсене кашни кун пусма тытăнчĕç. Тутлă шаркку, яшка çисе киленетпĕр. Вырсарникун калаçу Шурăмпи пирки пулчĕ. Ăна та паян вĕрекен шыва пăрахма хатĕрленеççĕ. Чун чăтмалла мар ыратрĕ.

– Атте, тусăма кӳрентерсен санпа тек выляма мар, калаçмастăп та, – терĕм сĕтел хушшинчен васкаса тухнă май.

– Килес çул каллех чĕпсем туянăпăр. Уншăнах мĕн кулянса пăшăрханмалли пур? – терĕ вăл лăпкăн çеç.

Тухрĕç картише. Эпĕ те вĕсенчен юлмарăм. Тытăнчĕç Шурăмпие хăвалама! Çапла айкашнă вăхăтра юри калиткене уçса хутăм. Ак хайхи! Шурăмпи урамалла хавасланса вĕçсе тухрĕ... Ăмăр çанталăкра сасартăк хĕвел пăхса ячĕ.

– Атте, куратăн-и, çутçанталăк та Шурăмпие çак çĕр çинче пурăнтарасшăн... – сăмахăма малалла каласа пĕтерейменрĕм... лĕр! макăрса ятăм.

– Эсĕ калана пек пултăр апла, тивер мар тусна, – килĕшнине пĕлтерчĕ атте.

Савăннипе пĕр вырăнта тапăртатса илтĕм. Ара, юратнă тусăма, Шурăмпие çăлма пултартăм-çке. Килес çул вара вăл пире нумай-нумай чĕпĕ парнелессе шансах тăратăп. Тулĕк çав Хăрхăм çинчен шухăшласан чун ыратать. Шел, ăна упрама пĕлеймерĕм...

# Ĕмĕтĕмпе паллаштаратăпах

Çак тарана çитсе те лаша çине утланса курман эпĕ. Арçын ачалла питĕ ларас килет январь çине. Анчах пултараймастăп. Пиччемсем пекех ырă ĕмĕтпе пурăнатăп та çав...

Çуллахи пĕр хĕвеллĕ кун аннепе кĕтĕве тухрăм. Ман телее, юнашарах утсем çӳреççĕ. Еплерех ăмсанса пăхрăм вăрăм çилхеллĕскерсене! Патне пыма хăратăп. Кăнтăрла иртсен Самарăра пурăнакан аппан ачи Лариса çитрĕ. Манран икĕ çул кĕçĕн вăл. Ăна хам шухăша пĕлтерсен:

– Атя, тĕслĕх кăтартам. Тулĕк тĕлĕннипе те кĕвĕçнипе çурăлса ан кай, – терĕ те куç хупса иличчен шап-шурă лаша çине хăпарса ларчĕ.

Лариса мана çав вăхăтра таçта та хăпарса каякан арçури пек туйăнчĕ. Çапах та... манăн та унран юлас килмерĕ. Акă тĕлĕрекен ут патне çитсе те тăтăм, пуçĕнчен юратса ачашларăм. Çапла кĕтмен çĕртен пулнăран лаша хăранипе хыçалти урипе еплерех кĕрĕслеттерчĕ! Лекнĕ пулсан? Шăлсăр е çамкасăр юлаттăм пуль. Сывăраканни патне пымалла марччĕ ĕнтĕ. Хамах айăплă. Январсене куллен çамрăксем канма памаççĕ çав. Уйри утта турттараççĕ, фермăри тислĕке кăлараççĕ. Çитменнине яшсем тулли лавпах лашасене чĕн пушăпа хăваласа чуптараççĕ. Питĕ шел паллах. Ара, урхамахсене те тимĕртен туман-çке.

– Утланас килет-и? – илтрĕм сасартăк палламан арçыннăн хулăм сассине.

Çаврăнса пăхрăм та – пичче! Хайхискер ут яма килнĕ те эпĕ мĕн хăтланнине куç илми пăхса тăнă.

– Кунта кил! Часрах! – терĕ хыпăнса.

Çунатланса вăшт кăна ыткăнса çитрĕм пичче патне. Вăл мана хăвах тапаçлан тенĕн чĕлпĕре тыттарчĕ те айккинелле пăрăнчĕ.

– Ну, урхамах çилхинчен лайăхрах çатăрласа тыт та хăпарса лар! Асту, пуçне ан ыраттар! Хуллентерех. Вăрвартарах çаврăнкала. Măран упа пек ан пул. Кай, ăнăçсăр, аллусене йывăçран тунă пулĕ! Ăман евĕр мĕшĕлти.

Пĕтерет! Хайхискер çавнашкал кăшкăрашса тăнăран йăлт аптăрарăм. Ниепле те вăл вĕрентнĕ пек пурнăçлаймарăм. Çакăншăн вăл тата ытларах хăтăрчĕ. Хытă тарăхрĕ пулас юлашкинчен, аллăмри чĕлпĕре картах туртса илчĕ. Унтан лаша пуçĕнчи йĕвене хывса илчĕ те ялалла шăхăркаласа уттарчĕ. Кăмăла йăлтах пĕтерчĕ. Курăк çине чĕркуçлентĕм те макăрса ятăм. Лариса пырса çурăмран лăпкарĕ.

– Ан хурлан. Ĕмĕтӳ пурнăçа кĕтĕр тесен лайăхрах апатланмалла, – терĕ хайхискер куçран пăхса.

– Мĕн, халĕ выçă пурăнатăп-им эпĕ? – кутăнлашрăм куççулĕме шăлса.

– Апла каламарăм-çке. Ара, эсĕ пĕр чашăк пăтта та çисе яраймастăн-çке, – терĕ пушшине шартлаттарса.

Каçхине анне кăмакаран кукăль пĕçерсе кăларчĕ те хăй таçта тухса кайрĕ. Кĕçех Лариса сăмахĕ аса килчĕ. Пĕр пы-ысăк кукăле ярса тытрăм. Çĕçĕ шыриччен тесе алăпах тăватă пая уйăртăм та йăлт çисе ятăм. Аран сывлатăп.

Кĕçех алăк уçăлчĕ те пичче кĕрсе тăчĕ. Хăпăл-хапăл чӳрече умне пырса пăхрăм. Вăл киле лашапа килнĕ иккен. Авă урхамахне карта çумне çыхса хунă. Хыпаланса чупса тухрăм. Халĕ мĕн чухлĕ апат çирĕм те утланса ларатăпах ахăртнех. Январь çине хăпарас тесе пĕррех çӳлелле сикрĕм. Çук, тем пек тапаçлансан та – пулмарĕ. Пуçа усса пӳрте кĕтĕм.

Унтанпа темиçе уйăх та иртрĕ. Çапах та ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртейместĕп. Анне мĕн сĕннине йăлтах çиетĕп те çав. Тарăхнипе Лариса патне çыру шăрçаларăм.

«...Эпĕ сана хамăн чи çывăх юлташ тесе пурăнтăм. Эсĕ вара улталарăн мана. Мĕн чухлĕ çăкăрпа какай çимерĕм пулĕ, пĕрех усĕмерĕм. Лаша çине утланаймарăм. Урăхран ман пата çыру ан çыр!!!» – тесе юлашки предложени вĕçне пĕр харăс виçĕ кăшкăру палли лартрăм. Чун тинех лăпланчĕ.



© Валя ПЕРЕПЕЛКИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ӳкерчĕкĕ.

...Паян ирех урама сирпĕнсе тухрăм. Мăшăр йĕлтĕре сырас тенĕччĕ, кӳршĕсен умĕнче лаша тăнине асăрхасан унталла вирхĕнтĕм. Асăрханса мăйĕнчен, пуçĕнчен çупăрларăм, ачашларăм. Хусисем куриччен, тен, утланас? Çук, апла хăтланас мар-ха. Кирек епле пулсан та çуллаччен ут çине ларса сиккипе чуптарма вĕренетĕпех. Çав инçетре пурăнакан Лариса тĕлĕннипе калаçайми пулса ларĕ. Чăнах...

Ах, çиттĕрччĕ хăвăртрах çулла! Ĕнтĕ эпĕ çав кунсем çитессе чăтăмсăрран кĕтетĕп. Авă халĕ кăмака çине улăхса лартăм, чĕркуççине хуçлатса ытамласа тытрăм та пуçа хурса шухăша путрăм.

– Тен, аттене лаша туянма ăс парас? Ман шухăшăма вăл ырлĕ çеç, – терĕм сасăпах.

Чăнах, вăл ĕçрен таврăнсанах ăна хамăн ĕмĕтпе паллаштаратăпах...

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Ача-пăча кĕнеки – воспитани хатĕрĕ е вăйă-кулă?

**Ача-пăча литератури пирки сăмах пуçарсассăн вуншар ыйту çуралать: мĕнлерех пулмалла-ха унăн, мĕн пирки тата еплерех çырмалла, шăпăрлансемпе çамрăксен кăмăлне мĕнле çавăрмалла? Ку ыйтусем ытларах чухне поэтсемпе прозаиксене аптăрататçĕ тĕк ашшĕ-амăшне урăхлараххисем канăçсăрлантараççĕ: мĕнле кĕнекесем сĕнмелле-ха ывăл-хĕре, хăш автор хайлавĕсем интереслĕ те, усăллă та, произведени шухăшне тĕрĕс ăнланĕ-ши пĕчĕк вулакан?.. Вĕрентекенсен те хăйсен тĕллевĕсем. «Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ», – тени вĕсемшĕн ăс-тăнра çирĕпленнĕ, анлă сарăлнă ваттисен сăмахĕ кăна мар, пурнăç девизĕ те. Çак тĕрĕслĕхе вĕренекенсем патне те çитересшĕн учительсем.**



## Никĕсре – хавхалану тата пултарулăх

Ыйтăвĕсем паллă, апла пулин те вĕсене татса пама çăмăлах мар. Сăлтавĕсем тĕрлĕрен: пĕрешухăшлăх çукки, кĕçĕннисен литературине çителĕклĕ таран тимлĕх уйăрманни, аслисен сӳрĕклĕхĕ. «Ача-пăча литературин никĕсĕнче хавхалану тата пултарулăх пулмалла. Ăна аластисем мар, пысăк ӳнерçĕсем кирлĕ. Поэзи, поэзин ылмашĕ мар. Çитĕннисен литературин хушăмĕ çеç пулмалла мар унăн. Вăл – суверенлă правасемпе саккунсемлĕ аслă патшалăх», – тесе çырнă Максим Горький. Шел те, хăш-пĕр автор çакна ăнланмасăрах алла ручкăпа шурă хут ярса тытать. Çапла кун çути кураççĕ те кичем, пархатарсăр кĕнекесем. Тĕшши çук тăк, капăр ӳкерчĕксем те савăклăхпа тултараймĕç вĕсене. Ачасем вара вулавран сивĕнеççĕ. Хăйсене кăсăклантарман кĕнекесене урлă та пирлĕ çавăрса-тишкерсе лармаççĕ хĕр пĕрчисемпе арçын ачасем, шалт! кăна хупса хураççĕ.

Иртнĕ эрнере тĕп хуламăрти Ача-пăча тата çамрăксен библиотекинчи таврапĕлӳпе наци литературин пайĕнче «Ача-пăча кĕнеки – воспитани хатĕрĕ е вăйă-кулă?» ятпа хĕрӳ дискусси иртрĕ. Вулавăшпа Чăваш кĕнеке издательствин пуçарăвĕпе йĕркеленĕ мероприятие Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча кĕнекин кунне халалланă. Унта çыравçăсемпе ӳнерçĕсем, редакторсемпе журналистсем, библиотекарьсемпе вĕрентекенсем, çамрăк вулакансемпе ашшĕ-амăшĕ хутшăнчĕç. Вĕсем çавăн пекех Чăваш кĕнеке издательствинче тĕрлĕ çулта тухнă ача-пăча кĕнекисемпе паллашма пултарчĕç.

Дискуссие уçнă май Татьяна Захарова библиотекарь кăмăла хуçакан фактсем пĕлтерчĕ: унччен пирĕн патшалăх чи вулакан çĕршывсен шутне кĕнĕ тĕк, халĕ Раççей çыннисем кунне вăтамран тăхăр минут вулаççĕ. Аслă ăрурисем хушăран та пулин алла кĕнеке тытаççĕха. Çамрăксен вăхăтне вара компьютер вăййисемпе социаллă сайтсем вăрлаççĕ иккен. Мĕнпе çыхăннă-ха ку? Кăларăмсен пахалăхĕ пĕчĕк пулнипе-и, хайлавсем кăсăклантарманнипе-и, вĕсем яшсемпе хĕрсене хумхантаракан ыйтусене хускатманнипе-и? Çирĕплетсе калама хĕн, анчах литература йывăрлăхра пулни паллă. Паян вуламан ача ыран вулавăша çул тытасси иккĕленӳллĕ. Ĕç-пуça лайăх енне улăштарас тесен йывăрлăхсен çине алă сулмалла мар, сӳтсе явмалла, кăткăс лару-тăруран тухмалли çул-йĕре шырамалла. Эппин, ача-пăча кĕнеки – воспитани хатĕрĕ-и е вăйă-кулă?

## Шухăшĕ нумай, тĕрĕслĕхĕ пĕрре

Тĕлпулăва пуçтарăннисенчен кашниех хăйĕн шухăшне палăртрĕ. Светлана Гордеева журналист, сăвăç, ӳнерçĕ пĕлтернĕ тăрăх, кĕçĕн çулти ачасем чăн малтанах ӗлккен ӳкерчĕксене, хуплашкари хăйне евĕрлĕ сăнарсене асăрхаççĕ. Чун тĕпренчĕкĕ валли кирлĕ кĕнекесене аслисем суйлаççĕ ку тапхăрта. Каярахпа ача кирлĕ кăларăма хăй тĕллĕн тупма хăнăхать. Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕ – ăна тĕрĕс çул-йĕр кăтартасси, çыравçăсен – вăйă-кулă урлă воспитани парасси.

Кун пирки Максим Горький те çырнă. Вунă çула çитиччен ачасем ытларах вылясшăн-мĕн. Шăпах вăйă урлă вĕсем тавралăхпа, çут тĕнчепе паллашаççĕ. Сăмахпа та выляççĕ пĕчĕкскерсем. Çакнашкал хăнăхтарусем пулăшнипе тăван чĕлхе илемне ăша хываççĕ.

Валентина Пугачева сăвăç та сăмах еплерех хăватлине никамран аванрах пĕлет. «Кĕнекесем – пур ыпалан никĕсĕ. Вĕсем савăнăç кӳреççĕ кăна мар, пĕлӳ те парӑççĕ. Сăмахăн ачана хăй патне илĕртсе янăрамалла. Ывăл-хĕре вулава явăçтармаллах. Вулакан ача çеç ăнăçуллă та хастар. Çакна ăнланса ӳстĕр вăл», – терĕ Валентина Петровна.

Лев Кадкин çыравçă чылай вăхăт шкулта ĕçленĕ май арçын ачасемпе хĕр ачасен чунне витĕр курать тесен те йăнăш мар-тăр. «Паллах, аслисемшĕн ача-пăча кĕнеки воспитани хатĕрĕ вырăнĕнче. Шăпăрлансем хайлавсене шĕкĕлченĕ май пурнăç опытне пухаççĕ, çĕнĕ пĕлӳ илеççĕ. Произведенири сăнарсен шăпи çамрăка шухăша путма хистет. Тăтăшах вулакансен калаçу чĕлхи те пуянланать», – терĕ Лев Кириллович. Мероприятие пуçтарăннисене хăйĕн çĕнĕ кĕнекине («Воробьиный юг. Çерçи кăнтăрĕ») кĕнĕ «Ăслă кашкăр» юмаха вуласа пачĕ вăл.

Николай Ишентей сăвăç, прозаик вара кирек мĕнле ача-пăча кĕнекин те шăпăрлана ырăпа усала уйăрма, тĕрĕслĕхшĕн çине тăма вĕрентмеллине палăртрĕ.

Нина Дашкова дискусси хапăлласах хутшăнма кăмăл тунă. Библиотекарьсемпе кĕнекеçĕсен хускатнă çивĕч ыйту ăна та канăçсăрлантарать. Ара, вăл – амăшĕ те, вĕрентекен те. Çавăнпа та хĕр пĕрчисемпе арçын ачасем кĕнекепе туслашасси çитĕннисенчен чылай килнине пит аван ăнланать Нина Витальевна. Илемлĕ литературăна тимлĕх уйăрма вăхăт юлмасть тени те тĕрĕсех мар иккен. Кăмăл пулсассăн вăхăчĕ те тупăнать. Нина Витальевнăн ывăлĕ Даниил Дашков авă «Хураçка» кĕске калава (Иван Яковлев «Ача-пăча калавĕсем») пăхмасăр вĕренме те мехел çитернĕ.

Ĕçтешĕсен сăмахĕпе Анисия Игнатьева вĕрентекен те килĕшрĕ. «Кĕнеке вулакан ачасемпе калаçма та кăсăклă. Вĕсен пур япала пирки те хăйсен шухăшĕ. Хирĕçлеме те, мĕн те пулин çĕнни хыпарлама та пултараççĕ», – терĕ Анисия Павловна. Унăн вĕренекенĕ, тăххăрмĕш класра ăс пухакан Анна Сергеева та, калаçуран айккинче юлмарĕ. Хастар хĕр сăвă çырнисĕр пуçне чăваш халăх юмахĕсемпе те интересленет иккен. Авалхи халапсенче асамлăх та, пурнăçра кирлĕ пĕлӳ те пытаннине палăртрĕ вăл.

Ача-пăча кĕнекисене хатĕрлесе кăларас ĕçре ӳнерçĕсем çинче те пысăк яваплăх пулнине асăнчĕç мероприяти пухăннисем. Текстпа паллашиччен маларах ӳкерчĕке куçлать-çке-ха шăпăрлан. Вĕрентекенсем вара харăсах икĕ чĕлхепе (вырăсла тата чăвашла) тухакан кĕнекесене малашне те кăларма сĕнчĕç. Вĕсемпе хула шкулĕсенчи чăваш чĕлхи урокĕсенче усă курма та меллĕ.

Тĕрлĕ шухăш янăрарĕ дискуссире. Юлашкинчен çапларах пĕтĕмлетӳ патне пырса тухрĕç калаçăва хутшăннисем: аслисен аллинче ача-пăча кĕнеки – воспитани хатĕрĕ. Кĕçĕннисемшĕн вара вăйă-кулă мала тухать. Вĕрентекенсемпе ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕ – ачасене воспитани парас тата вĕрентес ĕçе тухăçлă та интереслĕ йĕркелесси, çитĕнекен ăрăва кĕнекепе туслаштарасси.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*




КĂСĂКЛĂ

# Уявлар-и?



Çулсеренех ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче, Ганс Христиан Андерсен çуралнă кун, Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча кĕнекин кунне паллă тăваççĕ. Ку йышăнăва 1967 çулта Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча кĕнекин канашĕ (IBBY) алă пусса çирĕплетнĕ. Çак уявра, икĕ çулта пĕрре, асăннă организаци Г.Х. Андерсен премине тивĕçнĕ çыравçăсемпе ӳнерçĕсене чыслать. Ача-пăча кĕнекин кунне палăртасси пирки пуринчен малтан паллă нимĕç çыравçи Йелла Лепман сăмах пуçарнă.

Ача-пăча литератури йĕркеленнĕренпе нумай та вăхăт иртмен-ха. XVII ĕмĕр варринченех ачасене е юмахсем каласа панă, е вĕсем, аслисем пекех, юптарусем вуланă. Пĕтĕмĕшле вара, вулав Библие шĕкĕлчессипе çыхăннă.

XVIII ĕмĕрте вулакансене Д.Дефон «Робинзон Крузо», Дж.Свифтăн «Путешествия Гулливера» хайлавĕсем тыткăнланă. Тухăç юмахĕсен пуххисем те хăвăртах саланнă.

XIX ĕмĕрте тин ачасем ятарласа вĕсене валли çырнă произведенисемпе киленме пултарнă. Кунта пĕртăван Гримсен, Г.Х. Андерсенăн юмахĕсене асăнмалла.

Раççейре те ача-пăча литературине пуçарса ярассине сахал мар тимлĕх уйăрнă. XVII ĕмĕртех Савватий иеромонах ятарласа ачасем валли сăвăсем шăрçаланă. XVIII–XIX ĕмĕрсенче С.Аксаков, А.Шишков, А.Погорельский тата ытти авторсем тăрăшнă. Çавăн чухнех пирвайхи ача-пăча журналĕсем кун çути курма пуçланă.

Совет çыравçисен – А.Гайдар, Н.Носов, А.Барто, К.Чуковский, В.Бианки, Б.Заходер, Э.Успенский – хайлавĕсене вара юратсах вуланă арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем. Паянхи кун та кĕçĕн çулти тата çамрăк вулакансем валли чылай кĕнеке пичетленет.

*Ольга ИВАНОВА.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

***Ку сăвва вăрçă ачине Петр Борисович Аниферова халаллатăп. Сăвăра çырса кăтартнисем чăн пулнă. П.Б.Аниферов Чăваш Республикинчи Çĕрпӳ районĕнчи Акташкасси ялĕнче 1928 çулхи июлĕн пĕрремĕшĕнче çуралнă. 2011 çулхи июнĕн пĕрремĕшĕнче, 83 çула çитиччен малараx вилнĕ.***

## Вăрçă ачи – Петя

Петя тесе ялта чĕнетчĕç
Çав сарă çӳçлĕ ачана.
Шкула вăл хаваспа вĕçетчĕ,
Юратнă тантăшсем ăна.

Петя вунтваттă тултарсан
Пуçланнă йывăр самана.
Вăраннă халăх ыйхăран
Хăваламашкăн тăшмана.

Пур арçынна та илсе кайнă,
Кам пултарайнă çапăçма.
Петюкăн амăшне хăварнă
Çич ачипе нуша курма.

Çулталăкран çырса пĕлтерчĕç:
«Пуç хунă мăшăр вăрçăра».
Эх, амăшĕн вăйне пĕтерчĕç
Çапла хăрушă хыпарпа.

Çав вăхăтрах шкула пуçтарчĕç
Ачасене илсе кайма.
«Анат Тагил», – тесе каларĕç,
Танк завочĕ кĕтет унта.

Нумай куççуль Петя юхтарчĕ,
Куçне шăлса çын куриччен.
Вăл ун чухне ача кăначчĕ,
Ялан шутлатчĕ кил çинчен.

Ирпе вăл вĕренме утатчĕ,
Кайран чупатчĕ ĕçлеме.
Вĕсен танксем кăлармаллаччĕ
Тăшмансене час çĕнтерме.

Çыврас килет-çке, хырăм выçă,
Ура сурать резинăран.
Петя çавах ĕçленĕ хытă,
Станокĕ умĕнчен кайман.

Пысăккисем те пит хĕрхеннĕ
Çак Петя пек ачасене,
Пĕр татăк çăкăр пулин сĕннĕ
Туйса вĕсем пит выççине.

Ак икĕ çул та иртсе кайрĕ,
Чакаççĕ Петьăн сывлăхсем.
Ури ăна канăç памарĕ,
Туртса лартаççĕ шăнăрсем.

Сыватмăшра нумай вăл выртрĕ,
Каларĕç урине татма.
Петян чĕри чул пек шак хытрĕ,
Пĕлмерĕ ним те калама.

Пĕр медсестра çĕрле килетчĕ,
Пăхатчĕ шутсăр хĕрхенсе.
Ури çине маççем сĕретчĕ,
Вăлах сыватрĕ-çке чĕртсе.

Петян ури мĕнле юсаннă,
Каллех пуçланă ĕçлеме.
Вăл амăшĕшĕнех куляннă,
Чĕри ун туртнă килелле.

Çитрĕ уяв, тăшман арканнă,
Ташлать пур халăх савăнса.
Çак Петьăна киле ăсатнă
Анат Тагил та ал сулса.

Кайран Петя каллех вĕçтерчĕ
Салтак пулмашкăн Читана.
Пилĕк çултан анчах вĕçленчĕ
Службi çак чаплă старшинан.

Виçĕ ача пăхса ӳстерчĕ
Чунтан юратнă мăшăрпа.
Нумай ĕçе тума вĕренчĕ,
Пур çын та хисеплет ăна.

Халь Петьăн çӳçĕсем шуралчĕç,
Чĕрин те чакрĕç вăйĕсем.
Ăна медальсемпе чысларĕç.
Шел, ыратаççĕ сурансем.

Пăхать хĕвел, çанталăк лайăх,
Сип-симĕс курăк ешерет.
Улать паян, йĕрет пур халăх,
Петя çак çĕр айне кĕрет...

*Галина ПЕТРОВА.*
Шупашкар.

## Шупашкарта пĕрремĕш хут

Шупашкарта пĕрремĕш хут
Паян ялтан килнĕскерсем.
Пĕр харăс пурте тытнă шут
Хула курма пĕчĕкскерсем.

Тăван чĕлхепеле вĕсем
Чĕвĕлтетеççĕ, савăнаççĕ.
Çуралчĕç ăшă туйăмсем:
Чăваш ратни – вĕсен хăвачĕ.

Çут шанчăк пулĕç-ха ӳссен,
Йăха мала тăсакансем.
Ăна хисеплеме пĕлсен
Манас çук ашшĕ-амăшне.

Чĕлхемĕре, ун илемне,
Илемлĕ, çепĕç кĕввине
Ан манчăр ĕнтĕ ĕмĕрне –
Пĕртен-пĕр амăш панине.

*Николай ЕРЕМЕЕВ.*
Чĕмпĕр хули.

## Шăшипе Кушак

Чупкалать кăна Шăши.
Хăнана чĕнет кӳрши.
Вăй-хал унăн çитет-ши?
Хăнана вăл каять-ши?

Кушак патне васкаса
Шăши кайрĕ тет тухса.
Илчĕ пĕрле панулми,
Калаçать пĕр чарăнми.

Кушак итлесе ларать,
Шăшие çапла калать:
«Чарăн эс сăтăр тума,
Вăрçăри пек харкашма!»

Кушак пĕлет пурăнма –
Çиет кашни кун хăйма.
Хуçине йăпăлтатать,
Мăрлатса савăнтарать.

*Валентина ХРИСТОФОРОВА.*
Вăрмар районĕ,
Тупах ялĕ.



*© Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕ.*

## Çуркунне

Акă ăшăтрĕ çанталăк –
Хĕвел кулать пĕтĕм талăк.
Йывăççсем хитре шавлаççĕ,
Кайăксем аван юрлаççĕ.
Пурте кăмăллă, телейлĕ –
Çуркунне пулсан хĕвеллĕ.

*Даниил СЕРГЕЕВ, 3 класс.*
Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.

***Çак ĕçсем Куславкка районĕнчи Кунер ял вулавăшĕнче Константин Иванов çулталăкне халалласаирттернĕ çамрăк поэтсен конкурсĕнче çĕнтернĕ. Вулакансене вĕсемпе паллашма сĕнетпĕр.***

## Епле илемлĕ!

Тăван чĕлхе çĕклет мана.
Мухтав сана, чĕлхемĕр!
Сана юратса пурăнма
Эп хатĕр ĕмĕр-ĕмĕр.

Епле илемлĕ, чаплă эсĕ,
Епле хитре-çке сăмахсем.
Шыв шăнкăртатса юхнă евĕр.
Юхаççĕ санăн юррусем.

Тăван чĕлхе – тăван анне,
Эс сывлăш, пурнăçăм, хĕвелĕм.
Савар, мухтар чĕлхемĕре.
Тăван çĕре сыхлар, ентешĕм!

## Хаклă çын

Анне, эсĕ чи хитри,
Чи хакли, чи çывăххи,
Эсĕ питĕ ир тăратăн,
Пур ĕçе те пурнăçлатăн.

Выльăхсене çитеретĕн,
Тутлă апат пĕçеретĕн.
Пире ăшшăн вăрататăн,
Хăв ĕçе тухса каятăн.

Эпир сана юрататпăр,
«Тавтапуç», – тесе калатпăр
Эсĕ пире çуратнишĕн,
Çак тĕнчере пурăннишĕн.



*Аня НИКОЛАЕВА, 6 класс.*

## Тăван кил

Çутта курма çуралнă эпĕ,
Тăван тавралăха курма.
Таçта çитсен те савăп эпĕ
Хамăн юратнă кил-çурта.

Çуралнă кил – ман савнă
çуртăм.
Тăван çĕршыв – ман савнă тус.
Ялан çумра сана эп туйăп,
Хастар пуçна нихçан ан ус.

Тăван çĕршыв хакне кам туйнă?
Кам тӳснĕ ун ăраскалне?
Кама вăл чĕрине шантарнă?
Камсемшĕн тăкнă хăй юнне?

Тăван тавралăха упратпăр,
Шанатпăр вăл ешерессе.
Хĕрӳллĕ туйăмпа çунатпăр
Тавралăха хисеплесе.

Хаклă ялăн пĕр кĕтесĕ
Йăлтах тапратĕ кăмăла.
Вăл тĕнчере янраса кайĕ.
Ан ман эс çывăх кил-çуртна!

## Анне кулли

Анне кулли ман ăшăмра
Пĕрмай хĕрӳ хĕлхем çутать.
Сана чунтан юратнăран
Хăех-çке сăввăм çырăнать.

Пире савса эсĕ лăпканă,
Сиктернĕ ăшшăн сăпкара.
Кала, ăçтан хăват пуçтарнă?
Хăçан эс ĕлкĕрнĕ канма?

Сана курса халь çитĕнетĕп,
Туятăп пурнăç илемне,
Сана нихçан та эп çилленмĕп.
Эс пулăн яланах пĕрле!

Чи çывăх çын анне эс ман,
Чи çутă çăлтăр тӳпере.
Мана эс асăрхăн ялан.
Анне пуриншĕн те пĕрре!



*Надежда ИЛЬИНА, 11 класс.*

## Ял çĕнелет

Пирĕн ялăм паттăр ен,
Çыннисем кунта ĕçчен.
Ачисем вара хаваслă,
Пĕр-пĕринпе тус-юлташлă.

Пурăнатăп эп ялта,
Ăс пухатăп çĕн шкулта.
Вĕренетĕп тăрăшса,
Пур предмета юратса.

Тăван ялăм çĕнелет,
Кунсерен хитреленет.
Кая мар ял хуларан,
Курăнать вăл аякран.

Тăван ялăм, савнă кил,
Парсам мана ăшă пил!
Çулсерен эс капăрлан,
Пул çапла хитре ялан.

## Тăван чĕлхе

Ĕмĕрсем хушшинче
Эс упраннă куç пек.
Сар хĕвел ăшшинче
Кăварланнă тӳлек.

Шăнкăр шыв тĕпĕнче
Юхнă-юхнă хуллен.
Ĕмĕрсен тăршшĕнче
Хăватланнă куллен.

Чĕкеçсен чĕлхинчен
Илнĕ çепĕç илем.
Шăпчăксен юрринчен
Йăл-йăл çиçнĕ хĕлхем.

Çăлкуçсен шывĕнчен
Эсĕ халĕ таса.
Анлă Атăл çинче
Чӳхенен янăса.

## Тăвайккинче

Тухрăм хăвăрт урама,
Илтĕм эпĕ çунашка.
Кайрăм ак тăвайккине
Ярăнмашкăн кунĕпе.

Юлташа пултăр тесе
Илтĕм эп хитре тетте.
Çунашка çине лартса
Кайрăм хамăн тусăмпа.

Ярăнса ак антăмăр
Тăвайкки çинчен,
Упапа йăвантăмăр
Шурă юр çине.

Акă каç та пулчĕ,
Манăн кăмăл тулчĕ.
Утрăмăр тинех киле
Тусăмçăм-теттепеле.



*Любовь СЕРГЕЕВА, 8 класс.*

## Хĕлле

Иртсе кайрĕ кĕркунне,
Килсе çитрĕ сивĕ хĕл.
Часах пулĕ çуркунне –
Çакна эсĕ лайăх пĕл.

Шурă мамăк юрĕ те
Таврана хупларĕ.
Хуркайăк ăш еннелле
Тахçанах вăскарĕ.

Чĕрчунсем шартламаран
Пĕртте хăрамаççĕ,
Каллĕ-маллĕ чупнăран
Йĕрсем хăвараççĕ.

Ачасем те урамра
Туслăн ярăнаççĕ,
Хĕл çитнишĕн савăнса
Хытă янрашаççĕ.



*Юля СЕРГЕЕВА, 6 класс.*

# ПАТТĂРСЕН ÇЕМЙИ

*Антип НИКОЛАЕВ*


*Алексей Илларионович*


*Татьяна Николаевна*

## АВТОРТАН

Ку ĕç 1941 çулхи январь уйăхĕн пĕр кунĕнче пулнă.

Сакăр ывăл амăшĕ Татьяна Николаевна Николаева пĕрре савăннипе, тепре хумханнипе чĕтрекен аллисемпе посылка ешчĕкне уçнă. Унта çăмран çыхнă вĕр-çĕнĕ тутăр выртнă. Вăл ăна тирпейлĕн çĕкленĕ те, енче-енне çавăркаласа пăхнă май, пичĕ çумне тытнă.

– Тавтапуç, ывăлăм Кĕркури, – пăшăлтатнă амăшĕ. Çап-çутă куççуль тумламĕсене тутăр çине тумлатнă май вăл ассăн сывласа илнĕ. Çавăнтах унăн куçĕ умне Иваново облаçĕнчи Кинешмара милицире ĕçлекен ывăлĕ Григорий тухса тăнă. Акă, вăл арăмĕпе, Нюрăпа, магазина кĕнĕ пек, ун валли парне суйланă пек туйăннă ăна.

– Мана пула мĕн чухлĕ чăрмав, – шухăшланă Татьяна Николаевна. – Кирлех марччĕ чăрманма...

Çакăн пек пысăках мар, анчах амăшĕшĕн питĕ хаклă парнесем ытти ывăлĕсенчен те тăтăшах килсе тăнă. Вăл ачисен парнисемпе çырăвĕсене тирпейлĕ упранă, вĕсемпе ял-йыш умĕнче мухтаннă.

1944 çулта республикăра тухса тăракан «Красная Чувашия» хаçатăн пĕр номерĕнче çапла çырнă:

«Çав çул, Алексей Илларионович Хĕрлĕ Çартан тăватă ывăлĕ таврăнасса кĕтнĕ çул, вăрçă пуçланнă. Сăпайлă та ырă кăмăллă амăшĕ тата тăватă ывăлне вăрçа ăсатма хатĕрленнĕ. Чи аслă ывăлĕ Григорий ун чухне 37 çул тултарнă. Ашшĕ-амăшĕн ăсату сăмахĕсем кĕске те çуламлă пулнă.

– Ачасем, пирĕн ята ан ярăр. Пурнăçри йывăр самантсенче пире, ватă çынсене, аса илĕр. Тăшмана курайми пулма вĕренĕр. Эсир Исетеркkĕ ялĕнчи ахаль колхозникăн ачисем мар, сирĕн аçу – ватă салтак. Вăл Буденнăйăн утлă çарĕ тунă çĕнтерÿсене лайăх пĕлет.

Эпир сире Тăван çĕршыва хÿтĕлеме ăсататпăр. Тен, сирĕнтен хăшĕ те пулин тăван кĕтесе те таврăнаймĕ, тăван çуртăн стенисене те кураймĕ. Сире ăсатса ямашкăн пире питĕ йывăр. Эсир, акă, аçун куçне куратăр, аннÿн йывăр хуйхине туятăр, анчах Тăван çĕршыва сыхласси – чи пысăк тивĕç, – тенĕ Алексей Илларионович.

1941 çулта Алексеевсен çемйи пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланса кайнă. Çав çулхине кăнтăрта та, çурçĕрте те, хĕвеланăçĕнче те Алексеевсене курма май пулнă. Самай пуянлатнă вĕсем Хĕрлĕ Çара. Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионовичăн тăватă ывăлĕ Мускава хÿтĕлеме хутшăннă. Григорий – артиллерист, Иван – авиатор, Александр, Родион тата Фрол – автомашинăсен водителĕсем, Михаилпа Егор – пехотăн кĕçĕн командирĕсем, Павел пехотинец пулнă.

Алексей Илларионовичăн ывăлĕсем çырнă çырусем упранаççĕ. Вĕсем ашшĕ-амăшне манмаççĕ, çырусем вăхăтра çыраççĕ. Кашни çырăвĕ телейлĕ ашшĕ-амăшне савăнтарать, колхоз уй-хирĕнче пысăк çитĕнÿсем тума хавхалантарать...»

Малалла статьяра Алексеевсен аслă ывăлĕ Григорий çырнă çырури йĕркесене илсе кăтартнă:

«Хаклă аттепе анне! Украина çĕрĕ çинче çапăçатпăр. Çырасса çапăçу хирĕнчен çыратăп. Хам умра нимĕç фашисчĕсен чуралăхĕнче пурăннă совет çыннисен куççульне куратăп. Çак Украинăри каççенче эпĕ тĕрлĕ шухăшсемпе пуçа вататăп. Тăшман ишсе çĕмĕрнĕ çĕр тăрăх нумай утрăм эпĕ. Чăн та, пирĕн халăха пысăк инкек кÿчĕ вăл. Енчен те ăна Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче тытса чарман пулсан, унăн тискер те вăрăм аллине Сталинград патĕнче касса татман пулсан, тăшман пирĕн Чăваш çĕршывне те вут айне тăвĕччĕ, пысăк инкек кăтартĕччĕ».

Тепĕр темиçе кунран Исетеркkĕне Григорий Алексеева Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен ырă хыпар çитнĕ. Вăл çак хисеплĕ ята Днепр урлă каçса юханшывăн сылтăм çыранĕнче плацдарм çирĕплетсе хăварнăшăн тивĕçлĕ пулнă. Анчах та тан мар çапăçура герой хăй те пуçне хунă.

Ун хыççăнах ял-йыш Егор Алексеевăн паттăрлăхĕ çинчен илтнĕ. Житомир хулишĕн пынă çапăçура тăшман пулемечĕ пирĕн подразделенисене малалла кайма чарса лартнă. Егор Алексеев вара, дзот патне шуса пырса, ăна хăйĕн кĕлеткипе хупланă.

Илларионовсем патне тĕрлĕ фронтсенчен боецсемпе командирсем çырусем çырса тăнă. Вĕсем пĕртăван Алексеевсен паттăрла ĕçĕсемпе савăнмаллипех савăннă.

Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович та хăйсен ĕçри паттăрлăхĕпе кая юлман. Ватлăха пăхмасăр колхозра ĕçленĕ, ялти общеçтвăлла ĕçсене те активлă хутшăннă.

Çак кĕнекере автор пĕртăван Алексеевсен вăрçăри паттăрлăхĕ çинчен каласа парать. Ăна Татьяна Николаевнăн, Александр, Михаил тата Родион Алексеевсен, Григорипе Фрол Алексеевсен арăмĕсемпе ачисен, Исетеркkĕ ялĕнче пурăнакансен асаилĕвĕсемпе, çавăн пекех упранса юлнă документсемпе тата çырусемпе усă курса çырнă.

## Иван АЛЕКСЕЕВ

*Вăл вăрçăн пĕрремĕш кунĕнчех вилнĕ. 1941 çулхи кĕркунне унăн Совет Çарĕнчен киле таврăнмалла пулнă.*

*Иван Житомирти авиацин кĕçĕн специалисчĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн чи лайăх моторист шутланнă, полкри летчиксем ăна пурте хисепленĕ.*

### Сочиненирен илнĕ йĕркесем

Авиаци шкулĕнче вĕреннĕ чухне салтаксем сочинени çырнă. Иван Алексеев «Салтак амăшĕ» тема суйласа илнĕ. Шăп çак сочинение вăл ялти тăванĕсем патне ярса панă.

– Маншăн вăл чи хаклă çыруччĕ, ăна вуласан, хăйĕнпе курса калаçнă пекех туйăнатчĕ, – аса илчĕ Татьяна Николаевна. – Эпĕ ăна чылайччен упрарăм. Çĕнĕ çурт тунă чухне таçта çухалчĕ – хам та пĕлместĕп. Шыраман вырăн та, ыйтман çын та юлмарĕ пулĕ...

– Вăл мĕн çырнине аса илеймĕр-ши? – ыйтрăм ун чухне Татьяна Николаевнăран.

– Астумасăр, ара. Иван унта ман пирки çеç мар, мĕнпур салтак амăшĕсем çинчен çырнă. Кашни сăмахнех астăватăп.

Акă мĕн çырнă Иван хăйĕн сочиненийĕнче:

«...Кашни çыннăн пурнăçра çав тери йывăр самантсем пулаççĕ. Чĕре ыратать, чун тăвăнса килет ун чухне. Сана пулăшма пултаракан çын çук та пек туйăнать.

Анчах пур çавнашкал çын. Вăл – анне.

Пыр ун патне, каласа пар чĕрÿне мĕн ыраттарнине – вăл сана кирек хăçан та ăнланатех.

Сиплĕ эмел пекех, анне сăмахĕсем сурансене сыватĕç, çурхи ăшă çил пекех, аннен çепĕç аллисем сана ачашлĕç. Мĕншĕн тесен анне сана çуратнă, пăхса çитĕнтернĕ.

Ман суран – унăн суранĕ!

Ман хуйхă – унăн хуйхи!

Ман савăнăç – унăнă савăнăçĕ!

Кирек мĕнле инкек пулсан та, пыр ун патне – вăл сана пулăшать. Кирлĕ-тĕк – тĕрĕслĕхе тÿрех кусăран калать.

Уншăн эсĕ ăна кÿренме пултараймастăн: вăл санăн аннÿ! Унран хакли никам та çук!

Эсĕ, пĕчĕк çăмха евĕр, сăпкара выртнă. Унăн аллисем сана кипкепе чĕркенĕ, вăл сана тăрантарнă, чирлес-тăвас пулсан – сан патăнтан çĕрĕ-çĕрĕпе кайма пĕлмен, куçне те хупман.

Пурнăç алăкне уçма, малтанхи утăмсем тума сана аннÿ пулăшнă.

Сана вăл пĕрремĕш хут шкула ырă сунса ăсатса янă.

Кайран тата? Аса ил-ха кайран мĕн пулнине.

Аннÿ çур çĕр иртиччен сана кĕтет. Эсĕ ир енне тин килсе çитнĕ те сĕтел çине аннÿ хатĕрлесе лартнă апата хыпаланса çиетĕн. Хутран-ситрен хăвăн савнă хĕрÿ çинчен каласа паратăн аннÿне. Анчах вăл мĕнле туйăмпа сан çине пăхнине эсĕ асăрхамастăн. Саншăн савăнать те вăл, çав вăхăтрах чунĕ те ыратать.

Эсĕ çитĕнсе çитнĕ, сан пĕтĕм пурнăç умра, çавăнпа аннÿ савăнать.

Хăйĕн çамрăклăхĕ тахçанах иртсе кайнă: мĕн пулнине тепĕр хут таврăйман, çур çĕр иртсен, çын ыйăхне татса каласа памаллисем унăн çук ĕнтĕ, çавăнпа чуна тунсăх витет. Анчах амăшĕн савăнăçĕ тем тесен те пысăкрах: эпĕ пур-çке унăн!

Эсĕ килессе кĕтсе, вăл çур çĕрчен çывăрмасăр выртнă. Эсĕ вара çур çĕр иртсен тин килетĕн...

Халĕ эсĕ салтак. Аннÿ сан инçе-инçе. Анчах ан ман: лере, инçетре, тăван ялта, вăл сана кĕтет, саншăн пăшăрханать, сана вĕçĕмсĕр ырлăх-сывлăх, паттăрлăх сунать.

Ан тив, эсĕ халĕ çирĕмрен кăна иртнĕ е вăтăрта е хĕрĕхре – аннÿшĕн эсĕ пурпĕрех пĕчĕк ача пек шутланатăн...»

Татьяна Николаевна саппун кĕтессипе куçне шăлса илчĕ.

– Юлашкинчен Иван шăпах ман çинчен çырнăччĕ. «Акă мĕншĕн, – тенĕ вăл, – эпĕ хамăн аннене çав тери юрататăп. Ман шутпа, анне юратăвĕнчен хăватлăраххи, çирĕпреххи тĕнчере нимĕн те çук.

Кирек ăçта пулсан та – йывăр походсенче е вĕренÿре – эпĕ пĕлетĕп: инçетре маншăн çывăх та хаклă çын пурăнать, ăна манран та йывăртарах килет, вăл мана юратать, хытă кĕтет.

Мĕн ĕмĕр-ĕмĕрĕпех эпĕ анне умĕнче парăмра пулатăп...»

Татьяна Николаевнăн куçĕ каллех шывланчĕ, каллех саппун вĕçне алла тытрĕ.

### Тĕлпулу

1941 çулхи май пуçламăшĕнче авиацин кĕçĕн специалисчĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă кĕçĕн сержант Иван Алексеев 66-мĕш штурмовой авиаполка пырса çитрĕ. Хăй килни çинчен дежурнăя пĕлтерсен, лешĕ ăна тăваттăмĕш эскадрильăн казармине ячĕ.



Казармăна кĕрсен Иван дневальнăйран темĕн ыйтасшăнччĕ, анчах сасартăк такам хаваслăн кăшкăрса янине илтрĕ:

– Пăх-ха ăна, эсĕ те кунта-çке, Иван!

Кĕçĕн сержант çаврăнса пăхрĕ те тĕлĕнсех кайрĕ.

– Сывă-и, Георгий?

Вĕсем пĕр-пĕрин аллисене хыттăн чăмăртарĕç – тĕлпулушăн пĕртăвансем пекех савăнса ÿкрĕç. Авиаци шкулĕнче вĕсем иккĕшĕ пĕрле вĕреннĕ. Анчах, хуçалăхри ĕçсем пĕтиччен тесе, шкул начальникĕ Ивана юсавçăсен командинче хăварнă. Халĕ вара, вунă кун иртнĕ хыççăн, туссем каллех пĕрле.

– Каласа кăтарт-ха, ĕçсем мĕнле пирĕн шкулта, мĕн çĕнни пур? – юнашар пырса ларчĕ кĕçĕн сержант Георгий Антонов (халĕ вăл Муркаш районĕнче Исетеркkĕ ялĕнче пурăнать).

Иван хулпуççине сиктеркелесе илчĕ.

– Çĕнни нимех те çук. Çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленсе çитрĕмĕр.

– Пурте хатĕр апла? Питĕ аван. Пурте тăрăшса ĕçлеме эппин. Эпĕ те кунта çав вунă кун хушшинче ăстаçă пулса тăтăм темелле. Самолета хамах пăхатăп.

– Ĕç килĕшет-и?

Георгий служба çинчен калама пуçланăччĕ кăна – дежурнăй каçхи апата йĕркеленсе тăма команда пачĕ. Унтан подразделенири старшина çамрăк специалистсене кун йĕркипе паллаштарчĕ. Çавăнпа та Иван малтанхи каç юлташĕпе ниепле те калаçаймарĕ.

Ир енне кĕтмен çĕртен – тревога. Авиаторсем васкаса тумланчĕç те машинăсем патне чупрĕç. Алăк патĕнче Иван каллех Георгие курчĕ. Пĕр-пĕрин çине пăхса илме çеç ĕлкĕрчĕç: «Мĕн тăвăн, служба».

Аэродромра самолетсем умĕнче комбинезон тăхăннă çынсем хĕвĕшеççĕ. Ăста специалист пекех, Георгий те хăй ĕçне тăвать. Иван ăна чылайччен ăмсанса сăнарĕ...

Часах «отбой» команда пачĕç.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Алексеевăн ăсталăхĕпе пĕлĕвĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пычĕ. Хăй те тăрăшрĕ, аслисем те пулăшрĕç ăна. Самолета вĕçеве мĕнле хатĕрлемеллине, моторта мĕнле кăлтăксем пулма пултарассине кăтартрĕç, вĕсене тупса юсама вĕрентрĕç...

– Хальхи пекех астăватăп, – каласа парать халĕ запасри сержант Георгий Антонович Антонов. – Ивана малтан вĕренÿпе тренировка самолечĕн моторисчĕ пулма çирĕплетрĕç. Унăн вара çапăçăва хутшăнакан самолет çинче ĕçлес килетчĕ. Кăмăлсăр çÿретчĕ вăл ун чухне. Çакна техник та асăрхарĕ.

– Мĕн, самолет килĕшмест-им? – ыйтрĕ офицер, аллипе самолет фюзеляжне сăтăркаласа. – Кăлăхах кÿренетĕн. Лайăх машина. Унпа çамрăк летчиксем вĕçме вĕренеççĕ. Тен, эсĕ ĕç нумай пулнăран хăраса ÿкрĕн?

– Çук, йывăрлăхран хăрамастăп эпĕ.

– Йывăрлăхсем вара пулаççех. Тÿрех калатăп, – çирĕпреххĕн хушса хучĕ техник. – Тепĕр чухне машина кунне тăватă-пилĕк хутчен сывлăша çĕкленет. Ăна тĕплĕн пăхса тухма ĕлкĕрмелле. Вăхăчĕ сахал. Эх, аппаланма лекет вара ун чухне! Çав йывăрлăхсене çĕнтерсен, кăмăл та çĕкленет.

Офицер тĕрĕссинех каланă ĕнтĕ. Ара, Алексеева, аякри чăваш ялĕнчен килнĕскере, малтан, чăнах та, йывăр тивнĕ. Ӳркенмен ăста пулнă, теççĕ-çке-ха чăвашсем. Иван вара çак кĕске те тарăн шухăшлă сăмахсене нихçан та асран яман. Вăл пăхакан самолет çапăçăва кĕме ялан хатĕр тăнă.

**(Малалли пулать).**

# Нинук тĕпелĕ

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Какай пӳремечĕ



**Çак тутлă çимĕçе хатĕрлеме аш арманĕпе авăртнă çур килограмм какай, 150 грамм шăратнă сыр, 300 грамм тăпăрчă, 100 грамм хытă сыр, 1 çăмарта, хăвăра кирлĕ чухлĕ тăвар, пăрăç, ыхра кирлĕ.**

Какая теркăпа хырнă хытă сырпа, тăвар-пăрăçпа, чĕрĕ çăмартапа хутăштарăр. Тăпăрчăпа шăратнă сыра та пĕрлештерĕр. Какайран йăва евĕрлĕ пысăкăх мар çавракасем тăвăр та тăпăрчă хутăшĕ хурăр. Пӳремече кăшт çу сĕрнĕ формăна вырнаçтарăр. 180 градус таран хĕртнĕ духовкăра 40 минут пĕçерĕр. Кайран çиеле вĕтетнĕ симĕс сухан е урăх ешĕл çимĕç сапăр.

## Беконпа хатĕрленĕ çĕрулми

**Çимĕç (2 порци) валли 6 çĕрулми, 4-5 бекон татăкĕ, 3 ыхра шăлĕ, тĕрлĕ пăрăç хутăшĕ, кăштах базилик (кăмăллатăр пулсан) кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çĕрулмие шултăра, бекона пысăкăх мар татăксене турăр. Çимĕçсене вĕтетнĕ ыхрапа тата апата техĕмлетекен ытти япалапа пăтратăр. Пĕтĕмпех çу сĕрнĕ формăна хурса 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартăр та 25 минут тытăр.

## «Афродита» салат

**Салат валли 2 тĕтĕмленĕ чăх пĕççи, 2 çăмарта, 200 грамм корея кишĕрĕ, майонез кирлĕ.**

Шăмминчен уйăрнă какая, çăмартана тăваткалласа турамалла та тăварпа тата майонезпа пăтратмалла. Пур çимĕçе те савăта сийĕн-сийĕн хумалла: малтан кишĕр, хыççăн çăмарта, юлашкинчен какай. Хатĕр салата ешĕл çимĕçпе илемлетĕр.

## Килти шăккалат

**Шăккалат хатĕрлеме 5 апат кашăкĕ какао порошокĕ, çавăн чухлех сĕт, 50 грамм услам çу, 6-8 кашăк сахăр, 1 чей кашăкĕ çăнăх, чей кашăкĕн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ чухлĕ ваниль сахăрĕ тата вĕтетнĕ мăйăр (хăшĕ килĕшет) кирлĕ пулать.**

Какао порошокĕпе сахăра хутăштарăр та 1 кашăк сĕт хушса лайăх пăтратăр. Юлнă сĕте ярăр. Савăта пысăкăх мар çулăм çине лартăр та вĕреме кĕриччен пăтратса тăрăр.

Хыççăн услам çу хушса çулăма пĕчĕклетĕр. Вĕреме кĕрсен кастрюле çулăм çинчен илĕр те вĕтĕ алапа алласа çăнăх ярса пăтратăр. Савăта каллех çулăм çине лартăр. Вĕреме кĕрсен плита çинчен илĕр. Кăштах сивĕнсен ваниль сахăрĕ хушăр.

Шăккалата çу сĕрнĕ пăр шăнтмалли формăна ярăр. Мăйăр сапăр.

## Сĕнӳсем

**Пӳрт-çуртра ĕçленĕ чухне çак сĕнӳсемпе усă курса пăхăр. Ун чухне пĕр-пĕр ĕçе пурнăçлама чылай ансатрах та çăмăлрах пулĕ.**

◊ Шăннă какая ăшăтма вăхăт чылай кирлĕ. Апла ун çине кăштах уксус ярса хурăр. Вăл хăвăртрах ăшăнса çитет, пиçсен тутлăрах та пулать.

◊ Çĕрулми е макарон йышши çимĕçе пĕçернĕ шыва тăкма ан васкăр. Ăна сивĕтсе килти чечексене шăварăр. Çимĕçсен усăллă япалисем «ӳсен-тăран кăмăлне каяççĕх».

◊ Чĕрĕ çăмарта чылай вăхăт сивĕтмĕшре тăрать-и? Вăл çиме юрăхлинче иккĕленетĕр-тĕк çапла тĕрĕслесе пăхăр: çăмартана шыв тултарнă тирĕке ярăр. Пăсăлманнисем тирĕк тĕпĕнче юлаççĕ. Çиеле хăпарнă çăмарта пĕтĕмпех курăнмасть пулсан ăна çывăх вăхătрах çимелле. Шыв çийĕнче çăмăллăнах «ишекен» çимĕç вара пăсăлнă.

◊ Сивĕтмĕше хунă çăмарта нумайрах упрантăр тесен ăна шĕвĕр вĕçĕпе аялалла вырнаçтармалла.



● МОДА

# Çăмăллăх, ирĕклĕх тата стиль

**Аслăрах çулсенчи ачасен моди хăш чухне хăйне евĕрлĕ те тĕлĕнтермĕш. Дизайнерсем пĕр-пĕринпе килĕшсе тăман тумтире те килĕшӳллĕн майлаштарса кăтартаççĕ. Çакăнта унăн хăйне евĕрлĕхĕ палăрать – çамрăксен моди ачасен кăмăл-туйăмне те сăнарлать. Тумтир кашнине модăпа килĕшӳллĕн тата хăйне евĕрлĕ кăтартать, ыттисенчен уйрăлса тăма май парать.**



**2015 çулхи çуркуннепе çулла мĕне ытларах тимлĕх уйăрмалла-ха?**

Кăçал çамрăксене модельерсем ытларах oversize стиле суйлама сĕнеççĕ. Арçынсен фасонĕ евĕр çĕленĕ джинс шăлавар тата кирлĕ размертан пĕр-икĕ размер пысăкрах кофта е свитер – чăн-чăн мода хичĕ. Çав вăхăтрах çамрăксене тивĕçтерекен япалара романтика сĕмĕ кашни тумтир пайĕнче тенĕ пекех палăрать. Кăçалхи модăпа килĕшӳллĕ тĕссем те тĕрлĕрен. Уйрăмах кĕрен, кăвак, хĕрлĕ, сăрă тата хăмăр тĕслĕ тумтир суйлама тăрăшăр.

Çуллахи чăн-чăн мода хичĕ вара – тĕрлĕ-тĕрлĕ илемлĕ саспаллисемпе, сăмахсемпе илемлетнĕ япаласем.

Чылай чухне çамрăксем пĕр-пĕр юрăçа, музыканта е ташăçа кумир вырăнне хураççĕ. Çакна вĕсем суйланă çи-пуçра та палăртма тăрăшаççĕ. Рок, поп, джаз-фанк, хип-хоп стильсем те ача-пăчапа çамрăксен хушшинче анлă сарăлнă. Хĕрачасем час-часах ташăçăсен тумтирне аса илтерекен тĕрлĕ йăлтăркаллă футболкăсем тата хускалма чăрмантарман меллĕ леггинсăсем суйлаççĕ. Çавна май кăçалхи модăн лозунгĕ – çăмăллăх, ирĕклĕх тата стиль. Çакна асра тытса суйланă çи-пуçпа эсир чăнах та модăпа килĕшӳллĕн тумланнисен йышне кĕретĕр.

Хĕрачасем, çуллахи тумтир туяннă чухне пĕр шикленмесĕрех кĕске юбка илме пултаратăр. Вĕсем кăçал та модăра. Вăл пилĕк тĕлĕнче хутламлă тата сарлакарах аркăллă çеç пултăр. Ыттисенчен уйрăлса тăрас текенсем вара, хăйне евĕрлĕ тĕрĕпе, ӳкерчĕкпе илемлетнине суйлăр. Çавăн пекех çăмăл, вĕлкĕшекен пусмаран çĕленĕ вăрăм юбка тăхăнни вырăнлă. Вăл темиçе сийлĕ пулсан та аван. Уйрăмах мамăк пир тата пурçăн пусмана чĕнтĕрлĕ е витĕр курăнаканнипе пĕрлештерсе çĕленине палăртмалла.

Ӳкерчĕксене пăхсан кунта чечекçеçкепе ӳкерсе илемлетнĕ тумтир малти вырăн йышăнать. Анчах та вĕсем те хăйне евĕрлĕ пулмалла. Дизайнерсемпе стилистсем çутçанталăкра тĕлпулман, ӳнерçĕсем шухăшласа кăларнă чечексене илемлетнĕ çи-пуç суйлама сĕнеççĕ. Чи кирли – футболка е юбка çинче чечек ытла нумай ан пултăр.

Арçын ачасем валли çĕнĕлĕхсем сукпа пĕрех. Çулсеренех малти вырăнта тăракан икĕ стиль – классика тата спорт – яланхи пекех модăра. Контрастлă тĕссемпе уйрăлса тăракан кĕпе, шăлавар, свитер, ытлашши пайсемпе куçа тăрăнман хура пушмак – чăн-чăн яшсем суйлакан классика стилĕ. Кеда, çӳллĕ тĕплĕ кроссовка тата çар ботинки евĕр пушмак та хальхи модăна сăнласа кăтартĕ.

2015 çулхи çуркуннепе çуллахи модăра пĕр улшăну пур – пилĕкĕ тĕлĕ аялта вырнаçнă джинс шăлавар тинех модăран тухрĕ. Ытти йăлтах малтанхи пекех.

Тумтир туяннă чухне модăпа килĕшӳллĕн курăнма ăнтăлса хăвăр хăйне евĕрлĕхпе илемлĕхĕре хупласа ан хурăр. Çи-пуç кĕлеткепе те, сăн-питпе килĕшӳллĕ курăнмалла.



Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.